Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1938
МАЙ
1
ВЫРСАРНИКУН
100 (4913) №

ЧĂВАШ КОММУНӖ

21-мӗш ҫул тухать — *ПСК(б)П Чăваш Обкомӗпе Тӗпӗҫтăвкомăн хаҫачӗ* — Пӗр №-рӗ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСӖ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редактăрăн 0—67
Ред. заместителӗн 0—88
Редакци секретарӗн 4—40
Дежурнăйăн 6—23

СЫВĂ ПУЛТĂР МАЙĂН 1-мӗшӗ— пӗтӗм тӗнчери пролетариатăн революциллӗ паттăр вăйӗсен смотрӗ!

Интернационаллă йалавпа

Пайăн аслă уйав—пӗтӗм тӗнчери пролетариатăн революциллӗ вăйӗсене паттăрăн пăхса тухмали кун.

Кăҫалхипе 49 хут палла тăвать пролетариат майăн 1-мӗшне.

Ҫак кун капиталисăмла ҫӗршывсенчи хуласен урамӗсенче пăшал сасси йапăрать, революциллӗ йалавсемпе урама тухакан рабочисемпе ӗҫҫыннисене пусарма полиципе ҫарсене мобилизацилеҫҫӗ, революциллӗ йалавсем йуна хӗрелеҫҫӗ. Ҫавăн пек тискер террора пăхмасăр капиталисăмла ҫӗршывсенчи рабочисем майăн 1-мӗшне демонстрацисем, забастовкăсем, пухусемпе митингсем туса палăртаҫҫӗ. Майăн 1-мӗшӗнче пур ҫӗршывсенче те хăватлă сасă илтӗнет: „Сывă пултăр Совет Сойузӗ—пӗтӗм тӗнчери ӗҫҫыннисен социалисăмла тăван ҫӗршывӗ!" Пӗтӗм ҫӗршывсенчи рабочи класпа ӗҫҫыннисем майăн 1-мӗшне Коммунисла Интернацинал йалавӗпе иртереҫҫӗ.

Ирӗклӗ те телейлӗ совет халăхӗ хӗрлӗ йалавсемпе, хавaслă йурăсемпе урамсене, площӗдсене тухса хăйӗн моральлӗ-политикăлă пӗрлӗхне, хăйӗн малти отрйачӗ—коммунисла парти тавра, Совет влаҫӗ тавра тата ҫулпуҫӗ Сталин йулташ тавра хурҫă стена пек ҫирӗп те тачă пӗтӗҫсе тăнине, социалисăмла ҫӗршывăн никам ҫӗнтерейми хăватне, интернационаллă щухăщ-кăмăлне кăтартать.

Совет Сойузӗ—социалисăм ҫӗршывӗ—майăн 1-мӗшне хуҫалăхри, культура строительствинчи, аслăлăхпа искусствăри калама ҫук пысăк ҫитӗнӳсемпе кӗтсе илчӗ. Ленин—Сталин партийӗ йертсе пынипе совет халăхӗ, пур тӗрлӗ тăшмансене те ҫӗмӗрсе пырса, хăйне вăльли ирӗклӗ те телейлӗ, хавaслă пурăнăҫ турӗ. Совет Сойузӗнчи халăхсем туслă ҫемйере пурăнаҫҫӗ. Вӗсене Сталинла Конституци ҫутатса, ăшăтса тăрать.

Социалисăм ҫӗршывӗн правительстви миршӗн тăрать, мирлӗ саманашăн вăйа шеллемесӗр кӗрешсе пырать. Анчах епӗр ҫакна пӗр минутлăха та манмастпăр: пирӗн тăван ҫӗршыв тавра капиталисăм тӗнчи пур-ха. Фашиссем пӗтӗм тӗнчине вăрҫă вутне чӗртесшӗн ҫунаҫҫӗ. Италипе Германи фашисăмӗ—Испани халăхне, Йапони—Китай халăхне вăрҫăпа тапăнса туллаҫҫӗ. Фашисла государствăсем Совет Сойузӗ ҫине, пӗтӗм тӗнчери пролетариатпа ӗҫҫыннисене капиталисăм пусмăрлăхӗнчен хăтăлмали ҫула ҫутă майак пек кăтартса тăракан социалисăмла ҫӗршыв ҫинӗ, вăрҫăпа тапăнма урса кайнă пекех хатӗрленеҫҫӗ. Йут ҫӗршывсен разведкисем Совет Сойузне шпионсем, диверсантсем йарса тăраҫҫӗ. Ҫав йут ҫӗршывсӗн агӗнчӗсем — троцкисла-сылтăмла, буржуалă-националисла бандитсем Совет Сойузне таткаласа уйăрасшăн ҫунаҫҫӗ, вăрҫăра пире парăнтарса пирӗн ҫӗршыва капиталисăм йӗркине кайала тавăрма ăмсанаҫҫӗ.

Ҫавăнпа та ӗнтӗ епӗр пайанхи кун Сталин йулташăн ҫак сăмахӗсене тата тепӗр хут аса илетпӗр:

„Епӗр миршăн тăратпăр, епӗр мир ӗҫӗшӗн ӗҫлетпӗр. Анчах епӗр пире йуханинчен хăрамастпăр, вăрҫă чӗртсе йаракансен тапăнăвӗ ҫине тапăнупах ответ пама хатӗр тăратпăр" (Сталин).

Ҫавăнпа ӗнтӗ епӗр хамăр ҫӗрщывăн оборонă хăватне тӗреклетессине асран мастпăр. Тăван ҫӗршыва сыхласси — [...]Р Сойузӗн кашни гражданинӗн чи тавӗҫӗ! Тăван Хӗрлӗ Ҫара, Тинӗс-ҫарты[...], Хӗрлӗ авиацийе, оборонă про[...]ннăҫне, оборонă ӗҫӗсене пур йенпе [...]ӗреклетсе, вăйлатса пырасси пирӗн [...]ллен тумали ӗҫ пулса тăрать.

Халăхăн хайар тăщманӗсем—троцкисла-бухаринла тата буржуалă-националисла шпионсемпе сăтăрҫăсем, йут ҫӗршывсен разведкиҫене тара кӗрешнӗскерсем—социалисăм ҫӗршывне, ирӗклӗ совет халăхне тискеррӗн курайманҫҫӗ, ҫав ҫӗлепкалтасем ирӗклӗ халăха хирӗҫ тӗмӗн тӗрлӗ ирсӗрлӗхсемпе сиенсем тума та хатӗр. Ҫавăнпа ӗнтӗ пирӗн майăн 1-мӗшӗнчи лозунгсем чӗнеҫҫӗ:

— Тăван ҫӗршыва йăрахса тăшмана сутăнакансене вилӗм!

— Пур тӗрлӗ двурушниксене пурне те тăрă шыв ҫине кăларар! Пирӗн партийе большевисăмăн никам ҫӗнсе [...]ми, крепăҫӗ туса хурар!

— Революциллӗ сыхăлăха вăйлатар! Хамăр хушăри политикăлă тимӗрлӗхе пӗтерер!

Кăҫалхи майăн 1-мӗшне епӗр РСФСР, тата Чăваш АССР Верховнăй Совечӗсене суйламалли суйлав кампанийӗ саралса пынă лару-тăрура уйавлатпăр. ССР Сойузӗн Верховнăй Совет суйлавӗнче коммунисемпе партире тăманнисен блокӗ чаплă ҫӗнтерӳ турӗ. Халь пуҫланнă суйлав кампани те хӗрӳлӗн саралса пырать. Совет Сойузӗнчи рабочисем, хресченсем, интеллигенци Сталинла Конституци панă правасемпе туллин усă кураҫҫӗ.

Майăн 1-мӗшӗнчи лозунгсем:

— Рабочисемпе хресченсем! Суйлав кампанине сарса пырăр! Пӗрле пулса советлă социалисăмлă республикисен Верховнăй Совечӗсене суйлама чи лайăх, Ленин—Сталин ӗҫне вӗсне ҫити парăннă ҫынсене палăртăр! — тесе чӗнеҫҫӗ.

Суйлав кампанине кирлӗ пек сарса пырса, коммунисемпе партире тăманнисен блокне тата хăватлăрах ҫирӗплетер! РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечӗсене социалисăмлă тăван ҫӗршывăн ҫулăмлă патриочӗсене суйлар!

Кăҫалхи ҫул пирӗн умра промышленнăҫра та, йалхуҫалăхӗнче те, культура строительствинче те калама ҫук пысăк ӗҫсем тăраҫҫӗ. Кăҫал Чăваш республикинче промышленнăҫ строительстви нихҫанхинчен пысăк пулать. Кивӗ хапрăксавăтсене те нумайӗшне аслăлатмала, ҫӗнетмеле. Хапрăк-савăтсен хăйсен производствă программине уйăхран уйăха, кварталтан квартала тултарса пымала. Йалхуҫалăхӗнче вăйлă тырпулшăн, социалисăмла выльăх-чӗрлӗхшӗн кӗрешсе виҫӗ тăванлă республикă ăмăртăвӗнче малала тухмала. Кăҫал шкулсем, пульницăсем, ача сачӗсем, ача ҫуратмали ҫуртсем лартас тӗлӗшпе пысăк ӗҫсем тумала. Промышленнăҫпа йалхуҫалăхӗнче, культура строительствинче те троцкисла-бухаринла-рыкăвла тата буржуалă националиссем фашисла бандитсем сăтăр туса сийен кӳнисене пӗтерсе, йертсе пырас ӗҫе ҫӗнӗ кадрсене, халăх ӗҫӗшӗн пӗтӗм чӗререн ӗҫлекен ҫынсене лартса, халăх хуҫалăхне малала хăпартса, ӗҫхалăхӗн пурнăҫне малала лайăхлантарса пымала.

Ҫак задачăсене пурнăҫа кӗртме хăватлă стахановла йухăма тата анлăлантарни, уйрăм рекордсенчен массăлă стахановла йухăма сарса пыни кирлӗ.

Пысăк ҫитӗнӳсемпе, хавaслă ӗмӗтсемпе ҫитрӗмӗр кăҫалхи майăн 1-мӗшне. Коммунисла партипе совет влаҫӗ тавра, аслă ҫулпуҫӗ Сталин йулташ тавра тачă пӗтӗҫсе, пур тӗрлӗ тăшмансене те ҫӗмӗрсе, малашне тата пысăкрах ҫӗнтерӳсем туса пырăпăр.

Сывă пултăр Коммунисла Интернацинал—вăрҫа хирӗҫ, фашисăма тата капиталисăма хирӗҫ кӗрешӗвӗн организатăрӗ! Сывă пултăр коммунисăм!

Никама пăхăнмасăр пурăнассишӗн Йапони захватчикӗсене хирӗҫ тата ытти захватчиксене хирӗҫ кӗрешекен аслă Китай халăхне тăванлă салам!

Никама пăхăнмасăр тата ирӗклӗ пурăнассишӗн паттăр кӗрешекен Испани халăхне салам!

Сывă пултăр Марксăн—Енгелсăн—Ленинăн—Сталинăн никам ҫӗнейми аслă йалавӗ! Сывă пултăр Ленинисăм!

ӲКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: Маркс—Енгельс—Ленин—Сталин
П. Васильйӗв художникăн ӳкерчӗк-композицийӗ. Сойузфото репродукцийӗ.

Коммунисла Интернационал 1938 ҫулхи Майăн пӗрремӗш тӗлне

Пӗтӗм ҫӗршывсенчи пролетарисемпе ӗҫҫыннисем!

Майăн 1-мӗш кунӗ — пӗтӗм тӗнчери пролетарисен пӗрлӗх кунӗ. Майăн пӗрремӗшӗнче пӗтӗм тӗнчери пролетариатăн революциллӗ вăйӗсене пăхса тухни кăҫалхи ҫул калама ҫук паттăр вырăн йышăнса тăрать.

Тӗнче вăрҫи пӗтнӗ хыҫҫăнхи вăхăтра пӗтӗм тӗнчери лару-тăру нихҫан та хальхи пек ҫивӗчленсе кайни пулман. Етемлӗхӗн тăваттăмӗш пайне каллех вăрҫă ҫавăрса илчӗ. Хăйсен халăх массисене ҫаратса пӗтерсе, чуралантарса хăварса, фашисла правительствăсем йут территорисене тапăнса кӗреҫҫӗ. Ытти халăхсене хирӗҫ вăрă-хурахла вăрҫăлă походсем тунипе вӗсем хăйсен ҫӗршывӗсенчи ӗҫҫыннисем тарăхнине путарса лартасшăн. Хăйсен йăвăрлăхсенчен тата фашисла режим панкрута тухнинчен хăтăлма вӗсем вăрҫăлă авантюрăсенче ҫăлăнăҫ шыраҫҫӗ. Вăрҫăн фашисла провокатăрӗсем етемлӗхе тӗнчери империалисăмлă ҫӗнӗ вăрҫăна сӗтӗрсе пыраҫҫӗ.

Инҫет-Хӗвелтухăҫӗнче Йапонири фашисла войенщичинă, Азире пуҫпулса тăрас тесе, Лăпкă океанра пуҫпулса тăрас тесе, Китай халăхне хирӗҫ унăн ҫӗрне туртса илес шутпа вăрҫă вăрҫать. Авалхи культура хулисем иҫӗлеҫҫӗ, пиншер йалсене вут тӗртсе ҫунтарса йанă, Йапони палачӗсем Китайри вуншар пин мирлӗ халăха нере-нере вӗлернӗ.

Анчах та палачсем тăватҫӗр мӗлйунлă Китай халăхӗн паттăрлăхне хуҫаймӗҫ. Пӗрлӗхлӗ нацилӗ фронта тачăрах та тачăрах пӗтӗҫсе пыракан Китай халăхӗ Йапони захватчикӗсене йăвăр ҫухатусем тутарать. Хăйне хӳтлесе, вăл Ази халăхӗсене хăйӗн кăкăрӗпе витсе тăрать, вăл колонисенчи мӗн пур халăхсене хăйсене пусмăрлакансене хирӗҫ кӗрешме чӗрӗ вăй парса хавхалантарать.

Испанире Германипе Итали интервенчӗсен ҫарӗсем ураҫҫӗ. Республикă ҫарӗ тимлӗн хирӗҫ тăнине хуҫма вăйсăр пулнипе, вӗсем сывлăшран бомбăсем пăрахса пиншер хӗрарăмсемпе ачасене вӗлереҫ, Испанири мирлӗ халăха ирсӗррӗн тавăраҫҫӗ. Испани халăхӗ хăй никама пăхăнмасăр пурăнассишӗн, Англи реакцилӗ консервативлă етемӗсем шарламасăр пулăшса тăракан фашисла государствăсен коалицине хирӗҫ; икӗ ҫула йăхăн ӗнтӗ, йумахри пек паттăррăн ҫапăҫать. Буржуалă-демократилӗ правительствăсем хута кӗмесӗр хăй тӗллӗн пӗччен тăратса хăварнă Испани халăхӗ хăйӗн демократилӗ республикине тӗнчери реакцин пӗрлешӳлӗ вăйӗсенчен ҫирӗппӗн хӳтлесе тăрать. Хăйӗн ирӗклӗхне хӳтлесе, вăл мӗн пур малала пыракан тата малала туртăнакан етемлӗхӗн ӗҫне хӳтлет.

Испанири интервенцишӗн никам та нимӗнле айăп та хуманнипе хавхаланса Германи фашисăмӗ **Австрине** ҫарпа пырса кӗрсе тытса илчӗ. 1934 ҫулта рабочисен хӗҫпăшаллă кӗрешӳне пусарнипе, ӗҫҫыннисене чи пӗчӗк ирӗклӗхсемсӗр тăратса хăварнипе Австрири пуҫпулса тăракан классем Германи фашисăмӗ тапăнса кӗрессине хатӗрленӗ. Австрире ҫирӗппӗн вырнаҫса ҫитмесӗрех, Германи фашисăмӗ ӗнтӗ Чехословаки ҫине тапăнма хатӗрленет. Польшă фашисăмӗпе пӗрле вăл Литвана туртса илсе валеҫсе пӗтерме тăрăшать. Балканри халăхсем государствă пулса пурăнассине тата наци тӗлӗшӗнчен никама пăхăнмасăр пурăнассине хăратса тăрса, вăл Балкан ҫинеле туртăнать. Вăл Бельгине, Голландине, Швейцарине, Скандинави ҫӗршывӗсене хăратса тăрать. Вăл Франци ҫине кӗтмен ҫӗртен сасартăк тапăнса кӗрес кайас шутпа, Францине йӗри-тавра фашисла картапа хупăрласа илет. Социалисăм ҫӗршывне хирӗҫ пысăк вăрҫа хатӗрленсе, чӗртавар, материаллă рессурсăсем тата етем резервисем тупма тăрăшса, вăл, тискер кайăк пекех, пур ҫӗрте те урса ҫӳрет.

Фашисла тискерсем пуҫа ҫавăн пек ирсӗррӗн ҫӗкленӗшӗн, вӗсем тӗнчен тӗрлӗ кӗтесӗсенче вăрҫă ҫулăмне чӗртсе йанăшăн кам айăплă-ха? Ҫакăншăн Англи консерватăрӗсен реакцилӗ ҫыннисем ответлă. Йапони войенщичини Китай ҫине тапăнсан, вӗсем пӳрнине те хускатмарӗҫ. Китайа валеҫсе пӗтерес ыйтăва лартас тесе, вӗсем Йапони вăрҫăпа йухăнасса ҫеҫ кӗтеҫҫӗ. Испани халăхне пăвса вӗлермеле тăвас тесе, вӗсем Итали фашисӗсемпе те килӗшӳ турӗҫ. Вӗсем Германи фашисăмне хӗҫпăшаллanма май парса, Германи фашисăмӗ майлă пулчӗҫ. Вӗсем унпа, Германи фашисăмӗпе, пӗтӗм тӗнчери рабочи класа тата халăхсен демократилӗ йухăмне хирӗҫ йунлă жандарм пек усă кураҫҫӗ. Вӗсем ăна Австри ҫине тапăнса кӗме шиллереҫ. Вӗсем ăна вăрттăн майпа Хӗвелтухăҫ йенелле Советсен ҫӗршывне хирӗҫ тӗллесе йараҫҫӗ.

Ҫавăн пекех Францири реакцилӗ буржуази те ответ тытать. Вăл Германи фашисăмӗ умӗнче парăнса ăна тӗрекленме пулăшрӗ. Кобленц загăвăрщикӗсем пек, Франци реакционерӗсем хăйсен халăхне хирӗҫ Германи фашисăмӗпе пӗрле вăрттăн тăраҫҫӗ. Ҫак хура вăйсем Блюм правительствине Испани республики тӗлӗшӗнчен блокадă политикине тытса пымала турӗҫ. Англипе Франци реакционерӗсен блокӗ социалисла тата профсойузла интернационалӗсен лидерӗсен фашисла йышши политикине буксир ҫинче сӗтӗрсе пычӗ, ҫав интернационалсем Германипе Итали интервенчӗсем Испанире вăрă-хурахла хăтланни умӗнче пачах нимӗн те тумарӗҫ.

Испани халăхӗ тăкакан йуншăн, вăл хӗн-хурпа асап тӳснӗшӗн, Китай ҫине вăрă-хурахла тапăннăшăн, Австрине ҫар вăйӗпе тытса илнӗшӗн фашисла тискерсем ҫеҫ те мар, тата вӗсене хӳтлесе пулăшса тăракансем те ответ тытаҫҫӗ.

Рабочи тăвансем!

Пуҫ пулса тăракан классем: мирлӗ пурнăҫа сыхлас интерессемшӗн Испани халăхне пăвнипе, Китайа чуралантарнипе, Австрине пусмăрланипе килӗшес пулать тесе, сире ирсӗррӗн улталаҫҫӗ. Вăрҫăсенчен — вăрҫă пуҫаракансене ытти халăхсене ҫаратма, вӗлерме ирӗк панипе мар хăтăлаҫҫӗ. Вăрҫăсене фашисла вăрă-хурахсене вăхăтра ҫавăрлăхлас тӗлӗшпе ҫирӗп политикă тытса пынипе ҫавăрлăхлаҫҫӗ.

Англи, Франци тата Америкăри Пӗрлешӳлӗ Штатсен правительствисем пӗтӗм тӗнчери фашисăма чарса лартма вăйсăр тесе ҫирӗплетсе, сире ирсӗррӗн улталаҫҫӗ. Вăрă-хурахла ӗҫе чарса лартма вӗсем пултараҫҫӗ. Ҫакна тума—мирлӗ саманана вăрҫă пуҫаракансенчен сыхласа хăварма интересленекен мӗн пур государствăсем **пӗрле тăрасси ҫинчен ССР Сойузӗ панă сӗнӗве** йышăнни кирлӗ. Вӗсен хăйсем пӗр пулса тăнине економикăлă хӗстерӳ тунипе ҫирӗплетмеле. Фашисла бандитсене кивҫен укҫа ан пачăр, вӗсене вăрҫăра кирлӗ чӗртавар ан парччăр, вӗсемпе суту-илӳ тумалли каналсене хупса ларччăр, Испани республикине хирӗҫ мар, ун ҫине тапăнакансене хирӗҫ блокадă тăвччăр. Чикӗсене уҫса Испани халăхне хӗҫпăшал ирӗклӗн илме май туса паччăр. Фашисăм, хӗнене йытă пек, кайала чактăр тесен, ҫакă та ҫителӗклӗ пулать.

Сирӗн алăра агрессăрсене хирӗҫ кӗрешес политикăна тыттарма правительствăсене хӗтӗртес тӗлӗшпе майсем ҫук тесе калакансене ан ӗненӗр йулташсем. Кӗрешме хатӗр тăракан рабочи клас — хăватлă вăй. Вăл шахтăсенче, савăтсенче ӗҫлет, вăл пуйăссемпе пăрахутсене ӗҫлеттерет, вăл, урăх никам та мар. Ҫӗршер пин демонстрантсен сассине никам та айала тума пултараймаст.

Анчах, пролетари тăвансем сирӗн вăй ӗҫе кӗтӗр тесен, **рабочи класăн пӗрлӗхӗ** кирлӗ. Сирӗн организацисен штабӗнче рабочи класăн ӗҫне сутакансем ан пулччăр. Сирӗн кӗрешӗве Ситринсем, Англи буржуазин агӗнчӗсем ан аркатччăр.

Рабочи йухăмӗн мӗн пур отрйачӗсем алла-алăн тытăнса пӗр тăшмана — фашисăма хирӗҫ кӗрешсен, сирӗн вăйсем темиҫе хут нумайланӗҫ. **Кӗрешӳн интернационаллă пӗрлешӗвӗнче есӗр халиччен курман ҫӗнӗ хăват пухаттăр.** Пӗтӗм тӗнчери пӗрлӗх фронтне пӗтӗҫнӗ рабочи клас тӗнчере фашисăма хирӗҫ кӗрешекен мӗн пур вăйсене хăйӗн патне туртса тăракан центр пулса тăрать. Хăй пӗрлешнипе вăл сойузниксем тупать, хăйӗн вăйне демонстрацилениипе вăл вӗсене революцилентерет, кӗрешӳре ҫӗнтерессине шантарать. Ҫавăн чухне вара, демократилӗ тесе калакан правительствăсен политикине пула, фашисăма пулăшас политикăна пула тӗрӗс ҫултан пăрăннă халăхсем хăйсен хăватне ăнланса илес, пур ҫӗрте те фашисла тискер ӗҫсене хирӗҫ ҫӗкленӗҫ. Ҫавăн чухне вара Германири, Италири, Йапонири халăхсем, фашисла шайккă пӗччен тăрса йулнине тата панкрута тухнине сисе, хăйсене пусмăрлакансене пыртан йарса тытӗҫ. Ҫавăн чухне вара фашисăмпа вăрҫа хирӗҫ **халăх фрончӗн йухăмӗ пӗтӗм тӗнчипе халиччен курман сулăмпа** саралса кайать.

Коммунисла Интернационал ӗҫҫыннисене кӗрешӳн ҫакăн пек ҫулӗ ҫине тăма чӗнет. Кӗрешӳн пӗтӗм тӗнчери пӗрлӗх фронтне тума вăл социалисла тата профсойузла интернационалсене пӗр хут мар чӗннӗ. Анчах та Ситринсем, пӗтӗм тӗнчери пролетариатăн пӗрлӗхлӗ ӗҫне аркатса, вăл чӗнӳсене ҫине тăрсах йышăнмарӗҫ. Хăйсен раскол политикипе вӗсем рабочи клас хăйӗн вăйӗсем ҫине шанса тăрассине пӗтерме тăрăшрӗҫ, тăшман умӗнче ăна хӗҫпăшалсăрлатма тăрăшрӗҫ, ҫапла тунипе фашиссене малашне те агрессисем тума хавхалантарчӗҫ.

Фашисăмăн троцкисла-бухаринла агенчӗсем, шпионла „IV-мӗш интернационал" Ситринпа алла-алăн тытăнса ӗҫлесе пычӗҫ. Ҫавсем ӗнтӗ ССР Сойузӗнче ӗлӗкхи пек тепӗр хут капиталисăм туса хурасшăн пулнă, Совет Сойузне татăкăн-татăкăн вакласшăн, унăн халăхӗсене фашисăм чури тăвасшăн пулнă. Ҫавсен кайăшӗсем ӗнтӗ фашисла интервентсене Испанире фронт уҫса панă, унăн республикă ҫарне тыран ҫапнă. Ҫавсем ӗнтӗ, Йапони разведкин заданийӗ тăрăх, Китайра диверсилӗ тата шпионла ӗҫ туса пыраҫҫӗ. Ҫавсем ӗнтӗ пур ҫӗрте те рабочи йухăмӗн сăтăрҫисем пек туха тă-

(Йулашки 2-мӗш страницăра).

Суйлавҫăсем хушшинчи ӗҫӗн ҫӗнӗ форми

ЧАССР Йустици Халăх Комиссариачӗ ҫумӗнчи парторганизаци суйлавҫăсем хушшинче кулленех ӗҫлесе пырать. Агитатăрсем агитацилӗ ӗҫе кружоксенче ҫеҫ мар туса пыраҫҫӗ, вӗсем суйлавҫăсене — килте ӗҫлекен хӗрарăмсене, пенсионерсене, старциксемпе карчăксене Йустици Халăх Комиссариатне чӗнеҫҫӗ. Апрелӗн 22-мӗшӗнче „Трубнăй овраг" урамӗнче пурăнакан суйлавҫăсен Йустици Халăх Комиссариатӗнче тӗне хирӗҫле вечӗр пулнă. Вечӗра 39 ҫын пуҫтарăннă. Вечӗрта агитатăр Иванова йулташ христосӗ ҫинчен суйакан йумах ҫинчен тата тӗн социалисăм строительствишӗн сийенлӗ пулни ҫинчен каласа панă. Иванова доклачӗ хыҫҫăн килте ӗҫлекен хӗрарăм Т. А. Агейева йулташ тухса каланă. Вăл хăйсем РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечӗсен суйлавне мӗнле хатӗрленни, хӗрарăмсем хăйсен сассине коммунисемпе партире тăманнисен блок кандидачӗсемшӗн парасси ҫинчен каласа панă. Доклад хыҫҫăн, вечӗр пулнă, унта ташланă, йурланă. Вечӗрта 70—80 ҫулхи старциксемпе карчăксем хăйсен пултарулăхне кăтартнă.

В. Игнатйӗв.

Коммунисла Интернационал 1938 çулхи Майăн 1-мĕш тĕлне

Пĕтĕм çĕршывсенчи пролетарисемпе ĕççыннисем!

(Й У Л А Ш К И)

раççĕ, фашисăма усă кÿрес тесе, Ситринпа пĕрле пĕтĕм тĕнчери рабочи класăн пĕрлĕхлĕ ĕçне аркатса йама тăрăшаççĕ. Çавсене ĕнтĕ, ирсĕр шпионсене, диверсантсемпе сывĕлерсене — Ситринсемпе Дансем хăйсен хÿтлĕхне илсе, хăйсен раскол политикине — çак вилĕмлĕ политикăна пурнăçа кĕртсе пымали йалав тăваççĕ.

Вăрçă чĕртсе йаракансен троцкисла-бухаринла шпионла бандине, Йапонипе Германи фашисăмĕн ирсĕр тарçисене çĕмĕрсе тăкнипе совет халăхĕ **мир ĕçне, рабочи класăн пĕрлĕх ĕçне, фашисăма хирĕç кĕрешес ĕçе** çав тери пысăккăн пулăшрĕ.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем!

Республикăлă Испани хăрушлăхра. Испани халăхĕн хайар тăшманĕсем Арагони фронтне татса кĕчĕç. Вĕсем çĕнĕ фарсемпе хĕçпăшалсене татти-сыппиcĕр йарса тăраççĕ. Тĕнчери реакци Испани халăхне вăрçăра çĕмĕрсе тăкма тăрăшат. Анчах та пĕтĕм тĕнчери мĕлйуншар рабочисем Испани халăхĕн çĕнтерÿне тăваççĕ. Çак çĕнтерĕве тума активлăн пулăшас тесе, вĕсем темле йăвăр асапсене те тÿсме хатĕр.

Испани халăхне халех чăп-чăп пулăшу памали хатĕрсем пур, çулсем пур, пĕтĕм майсем пур.

Мĕлйуншар рабочисен йачĕпе, Испани халăхне хÿтлес интерессемпе, пĕтĕм тĕнчери пĕрлĕхлĕ рабочи фронт тăвасси çинчен Коммунисла Интернационал социалисла тата профсойузла интернационалсене çĕнĕрĕн чĕнсе калат.

Республикăлă Испанипе пулăшмала, Китайа хÿтлемеле — çак вăл тĕнче вăрçине хирĕç кĕрешмелине, сирĕн тăван килсене, сирĕн çĕршывсен ирĕклĕхĕпе никама пăхăнмасăр пурăнассине фашисла палачсенчен хÿтлемелине пĕлтерет. Республикăлă Испанийе йе Китайа пăвса вĕлерме ирĕк паракан халăхсем хăйсем патĕнче хăйсен аллипех фашисла пусмăр хатĕрленĕ пулĕччĕç, хăйсен капиталисăмĕн чуралăх сăнчăрне йăйлатнă пулĕччĕç.

Пултăшсем!

Майăн пĕрремĕш кунĕнче урама тухăр! Испани халăхне витĕмлĕ пулăшу памали пĕтĕм тĕнчери пĕрлĕхлĕ рабочи фронтăн çапăçулă колоннисене тăрăр.

Испани халăхне хĕçпăшал!

Франци пролетарийĕсем, Париж коммунарĕсен мухтавлă ăрăвĕсем, республикăлă Испани çинчен блокадăна халех сирсе йама ыйтăр. Испани халăхне пĕтĕм тĕнчипе пулăшу памали пĕтĕм тĕнчери йухăм пуçне тăрăр!

Англи рабочийĕсем! Хăвăрăн пуçпулса тăракан классене фашиссен вăрă-хурахла ĕçне пулăшакан политикăна пĕтерсе лартма, социалисăм çĕршывĕ çине, хăйсен ирĕклĕхĕпе никама пăхăнасмарлăхшĕн кĕрешекен мĕн пур халăхсем çине тăшманла пăхас политикăна пĕтерсе лартма хушăр. Хăвăрăн профсойузсемпе рабочи партин реакцилĕ лидĕрĕсем кĕрешÿн пĕтĕм тĕнчери пĕрлĕхне хирĕç тăнине çапса хуçăр.

Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсенчи пролетарисем, пĕтĕмĕшлĕ мире фашисла пăсакансене çăварлăхламали политикăна, Линкольн тата Вашингтон традицине тивĕçлĕ политикăна тытса пымала тăвăр. Испанипе Китайа хĕçпăшал турттарса пыма чарнине халех пĕтерсе лартмала тăвăр.

Германири, Италири тата Йапонири рабочисем! Хăвăр халăха фашисла правителствăсен палачла планĕсен суккăр хĕçпăшалĕ туса хума ирĕк ан парăр. Хăвăрăн хăйулăн сиксе тăнипе, хăвăрăн ĕçсемпе, хăвăр тума пултаракан мĕн пур майсемпе фашисла тискерсен вăрă-хурахла вăрçисене аркатăр.

Пĕтĕм çĕршывсенчи фашисăма хирĕç кĕрешекенсем! Германипе Итали интервенчĕсене Испанирен, Йапони захватчикĕсене Китайран, нимĕç фашисĕсен бандисене Австрирен хăваласа кăларса йамала тăвăр.

Фашисла тискерсем пирки економикăлă, политикăлă тата урăхла санкцисем йышăнма ыйтăр.

Ĕççыннисем, фашисăма тата империалисăмлă вăрçа хирĕç рабочи класпа пĕрле хăватлă халăх фронтне пĕтĕçĕр.

Йевропăри, Америкăри тата Азири халăхсем! Çаратулă вăрçăсене чĕртсе йаракан фашисла вăрă-хурахсене хирĕç Совет Сойузĕн аслă халăхĕпе пĕрле мирлĕ пурнăçăн пĕтĕм тĕнчери фронтне тăвăр.

Пролетарисем!

Капиталисăмлă çĕршывсенчи пĕрлешÿлĕ рабочи клас социалисăм çĕршывĕнчи рабочисемпе сойуз тусан — ăна никам та çĕнме пултараймаст. Есĕр хăватлă совет халăхĕпе пĕрлешнинче фашисăма çапса аркатмали шанчăк.

Етемлĕх инкекĕ — фашисăм тĕп пултăр!

Вăрçă чĕртсе йаракансем тĕп пулччăр!

Сывă пултăр пĕтĕм тĕнчери рабочи класăн пĕрлĕхĕ!

Фашисăма тата вăрçа хирĕç кĕрешмели халăх фрончĕ сывă пултăр!

Сывă пултăр ССР Сойузĕ — социалисăмăн, мирлĕ пурнăçăн тата ирĕклĕхĕн терекĕ!

Буржуалă çĕршывсенчи рабочи класпа социалисăм çĕршывĕнчи рабочи клас хушшинчи сойуз сывă пултăр!

КОММУНИСЛА ИНТЕРНАЦИОНАЛĂН ĔÇТĂВАКАН КОМИТЕЧĔ.

Стахановецсем—округри суйлав комиççи членĕсем

ÇĔМĔРЛЕ. „Большевик“ савăтри рабочисемпе служащисем тата инженерлă-техника работникĕсем Çĕмĕрле суйлав округĕнчи РСФСР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен комиççи членĕсем пулса ĕçлеме Андрей Быватăвпа Петр Коньухăв йулташсене уйăрчĕç. Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен комиççи членĕ пулма Йелена Никифăрăвă йулташа уйăрнă.

Вĕсем виççĕшĕ те производствăра ÿссе çитĕннĕ çынсем. Петр Коньухăв йулташ производствăра 32 çул хушши, Андрей Быватăв йулташ 26 çул хушши ĕçлеççĕ. Пысăк квалификацилĕ работниксем. Йелена Никифăрăвă СССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен округри суйлав комиççи членĕ пулса ĕçлене. Вăл савăтри чи лайăх стахановка. Вăл ĕçлекен бригада 4 уйăх планне апрелĕн 24-мĕшĕнчех тултарнă.

Н. И.

ТĂВАН ÇĔРШЫВА СЫХЛАССИ— ССР Сойузĕн кашни гражданинĕн чи таса тивĕçĕ!

Ф. Козлов

Лейтенант Нинă

Ирхи тĕттĕ часах сирĕлнĕ. Хĕвел хĕмленсе хĕртнĕ. Тÿпе йашкăр уçă пулнă, самолĕтсем стартра, вĕсем ĕнер каçхинех вĕçеве хатĕрленсе тăнă. Таса та сутă пулнă вĕсем. Çурхи хĕвелпе ăмăртмала йалкăшнă туййăнă.

Самолĕтсен умĕнче тулли хавасăхпа çиççе тăракан паттăр сăн-сăпатлă çамрăксем стройпа йĕркеленсе пынă. Чарăнма команда панă вĕсене командир. Çамрăксем пĕр хускалмасăр шăпланса тăнă. Кĕтнĕ вĕсем. Малала мĕнле приказ пуласса тимлĕсе кĕтнĕ.

— Вĕçме хатĕр-и есĕр? — ыйтнă командир.

— Хатĕр йалан! — пулнă ответ.

— Парашютсем шурсăран та пур?

— Пур!

— Тĕрĕслене-и вĕсене?

— Тĕрĕсленĕ, пурте йĕркелĕ, йулташ командир!

— Есĕ пĕрремĕш хут вĕçетĕн? — ыйткă сасăпа ыйтнă командир, Нинă умне пырса.

— Çапла йулташ командир! — тенĕ Нинă, анлă кăкрине хăпартса. — Еп хатĕр.

— Пĕччен хăрамастăн?

— Нихăçан та!

Командир ăшшăн кулса илнĕ. Самолĕтсен умĕнче вăл утнă. Ун çинчен çамрăксем куçĕсене илмесĕр пăхса пынă. Нумайăш та вăхăт иртмен.

— Хатĕрленĕр!—тенĕ командир.

Çамрăксем кÿлĕ хĕрринче, хĕвел ăшшинче сунат çапса выляакан сокăлсем пек, сиккелесе самолĕтсен патне пынă. Кабинăна кĕрсе ларнă Нинă. Часах пропеллĕр çаврăнма пуçланă. Вĕçме командă пулнă. Вĕçме!

Самолĕтсем çĕр çинчен умлăн-хыçлăн уйăрăлса сывлăша хăпарнă. Кăштах тăрсан вĕсем çÿлĕрен-çÿле кайса кайăк йĕкерле çеç курăннă.

Çамрăксен самолĕчĕсем тепĕр сехетрен аеродром çине кайала вĕçсе килнĕ. Командир пуринчен малтан Нинăна пырса алă панă:

— Пултаратăн! — тенĕ вăл, çамрăк лĕтчицăна сăнса. — Самолĕта çĕр çине пултаруллă мастăрлăхпа лартрăн.

Нинă Павлăвă, 18 çулхи хĕр, çав тери хавхаланса кайнипе командира хирĕç нимĕнех те каламан. Манăçăр куп, манăçăр вĕçев, ку вĕçев, унăн хăй тĕллĕн вĕçнĕ чи малтанхи вĕçевĕ пулнă—çавна çеç лайăх ăнланнă Нинă.

1934-мĕш çулта, 19 çулхи Нинă Хĕрлĕ Çарти вĕçев шкулĕнчен „отлично“ паллăпа вĕренсе тухнă. Халĕ вăл авиозвенон командирĕ—лейтенант. Вĕçев ĕçĕнче Нинă нумай-нумай мухтава тивĕç мастăрлă тĕслĕхсем кăтартнă. Вăл йĕртсе пыракан звено пур маневренче те „паттăр звено“ йата илсе тухат. Кирек мĕнле йăвăр оперативлă задани парсан та, вăл заданисене Нинă йĕртсе пыракан звено отлично пурнăçлат. Унăн звенинчи лĕтчиксем: Етрикăв, Скворцов, Сидăрăв, Ашмарин йулташсен йачĕсем йалан хисеплĕ хăма çинче выран йышăнса тăраççĕ.

— Пирĕншĕн Нинă Павлăвă пример пулса тăрат, — теççĕ вĕсем. — Епĕр унăн ученикĕсем. Пирĕн çĕршыв çине фашиссем, епĕр хамăрăн тĕлĕнмелле вĕçевĕн мастăрлăхĕсене татах та витĕмлĕрех кăтартăпăр. Пуйĕсекенсен самолĕчĕсене ирĕклĕ тăван çĕршывăн таса сывлăшне паралама памастпăр!

— Епĕ хресчен хĕрĕ пулнă, — тет лейтенант Нинă. — Мана колхоз йăл, колхоз сумĕнчи комсомол организацийĕ пăхса çитĕнтернĕ. Вĕренме, пĕлÿлĕхе кунсеренех ÿстерме пехилене мана аттеме. Еп—тăван çĕршывăн хĕрĕ. Мана ÿстернĕ çак çĕршыв. Мана ÿстернĕ Сталин.

Украина, 1938 çул.

Сурйанинăв художникăн Май уйавĕ тĕлне ÿкернĕ плакачĕ, ăна Государствă çар издателстви кăларнă.

Сойузфото репродукцийĕ.

Социалисăм çĕнтерне çĕршывра

Совет Сойузĕнчи халăхсем майăн 1-мĕшне савăнăçлăн та чаплăн уйавлаççĕ. Пирĕн тăван çĕршыври телейлĕ граждансемшĕн майăн 1-мĕшĕ вăл—социалисăм çĕнтерĕвĕн пĕтĕм халăх праçникĕ, пĕтĕм совет халăхĕн мораллĕ-политикăла пĕрлĕхĕн хăватлă демонстрацийĕ, вăл Ленин—Сталин партийĕ тавра таччăн пĕтĕçсе тăни, вăл социалисăм çĕршывне фашисла вăрçă чĕртсе йаракансенчен йулашки йун тумламĕ йулмиччен сыхлама хатĕр тăни пулса тăрат.

* * *

Промышлĕннăç продукцине туса кăларас тĕлĕшпе Совет Сойузĕ Йевропăра пĕрремĕш выран тата тĕнчере (Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсем хыççăн) иккĕмĕш выран йышăнат. 1937 çулта ССР Сойузĕн промышлĕннăç продукцийĕ, 1929 çулхипе танлаштарсан 4,3 хут ÿснĕ. Çак çулта çĕршыври промышлĕннăç 1937 çулхинчен 15 процент ытла продукци памала. Ÿсĕмĕн кашни процентĕ пĕр мĕлйард тенкĕпе танлашат.

Ĕç тухăçлăхне ÿстерес çĕрте социалисăмлă ăмăрту хăватлă вăй пулса тăчĕ. Социалисăмлă ăмăрту промышлĕннăçпа йалхуçалăхĕн мĕн пур отрăçлисенче те сарăлса пырат. Стахановла йухăма чи пирвай пуçласа йанă çĕрте Донбасра 224 пин рабочи тата инженерсемпе техниксем 14 пин çын ăмăртса ĕçлеççĕ. Електромашиностройени промышлĕннăçĕнчи рабочисенчен 80 процентĕ—стахановецсем.

Колхозсен индустрилĕ бази кашни кунах ÿссе, пысăкланса пырат. 1938 çул пуçламăшĕнче çĕршывра машинă-трактăрлă станцисем пурĕ 5.819 пулнă, вĕсенче 367.000 трактăр, 104 пин комбайн, 62 пин автомобиль пулнă. Кăçалхи çул машинă-трактăрлă станцисене çĕнĕрен татах 500 организациле ç. Сойузри колхозсен мĕн пур акмали çĕр талкăшĕнчен 92 процентне йахăн машинă-трактăрлă станцисем ĕçлесе памала пулаççĕ.

Халăхсен аслă çулпуçĕн Сталин йулташăн лозунгне çĕкленсе хавхаланса, социалисăмлă йалхуçалăхĕнчи стахановецсем 1937 çулта çĕршывра халиччен пулман вăйлă тырпул—7 мĕлйард пăт тĕштырă пухса илчĕç.

Чи кĕске ĕç кунĕ тĕлĕшпе ССР Сойузĕ—тĕнчере пĕрген пĕр çĕршыв пулса тăрат, ĕççĕрлĕхе пĕтернĕ тĕлĕшпе тĕнчере пĕртен пĕр çĕршыв шутланат.

Совет Сойузĕнчи ĕççыннисем пуйан та культурăллă пурнăçпа пурăнаççĕ. 1937 çулта хулара тата йалта тĕрлĕ таварсемпе çимели продуктăсем çакăн чухлĕ сутнă: кăлбассисем, 1933 çулхипе танлаштарсан, 8,3 хут ытла, сахăр—3,4 хут, йĕтĕн сÿс пирĕсем—14,2 хут, сăран атă-пушмаксем—2,4 хут, патефонсем—1935 çулхинчен 5 хут ытла, велосипедсем—2,5 хут ытла сутнă.

Нумай ачалă ача амăшĕсем пурĕ **250 пин çемйе ытла** государствăран пособи илнĕ. 1936 çулхи июнĕн 27-мĕшĕнчен пуçласа 1938 çулхи апрелĕн 1-мĕшне çитеччен совет государстви нумай ачалă амăшĕсене 1.300 мĕлйун тенкĕ пособи тÿлене.

Совет халăхĕ аслăлăхпа культурă йенĕпе те **пит пысăк çитĕнÿсем** тунă. Йулашки вунă çул хушшинче совет правителстви халăха çутта кăларас ĕçе йанă расхутсем 33 хут ÿснĕ, 1937 çулта вăл расхутсем 18 мĕлйарда çитнĕ. Пуçламăшпе вăтам шкулсенче, техникумсенче 1937 çулта 38 мĕлйун çын вĕреннĕ (ку вăл 1913 çулхинчен 5 хут ытла пулат).

Çĕнĕ вĕренÿ çулĕ пуçланнă тĕле Сойузри хуласенче çĕнĕрен 845 шкул уçмала, йалта 1.500 шкул тăваççĕ.

ССР Сойузĕ—геройсен çĕршывĕ. Паттăрлăх, хăйулăх, çулăмлă патриотисăм—çĕнĕ çынăн пахалăхĕ пулса тăрат. Пирĕн социалисăмла тăван çĕршыв Чкалăв, Байдуков, Бельаков, Громăв, Йумашĕв, Данилин пек геройсене, Мускавран Çурçĕр польусĕ урлă Çурçĕр Америкăна пĕр лармасăр икĕ хутчен вĕçнĕ геройсене вĕрентсе ÿстерчĕ.

Ленин—Сталин партийĕ вĕрентсе ÿстернĕ, халăхăн шанчăк ывăлĕсем—Папанин, Кренкель, Ширшов тата Федарăв Çурçĕр польусне çĕнтерчĕç тата ăна аслăлăх йенчен сăнаса, тĕпчесе вĕренчĕç.

ССР Сойузĕн Верховнăй Совет суйлавĕсенче коммуниссемпе партире тăманнисен сталинла блокĕ чаплăн çĕнтерни—Октябĕрти Социалисăмлă Аслă Революци кĕрешсе илнисен чаплă та çутă итогĕ пулса тăрат. 90 мĕлйуна йахăн суйлавçăсем хăйсен сассисене коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн пачĕç.

Сойузлă тата автономлă республикăсен Верховнăй Совечĕсен çитес суйлавĕсем сталинла блок çĕнĕрен çĕнтерÿсем тунипе пулса иртĕç.

Вăл çак хисепе чăннипех тивĕçлĕ

Çергей Йегорăв йултащ Çĕмĕрле комбинатĕнче 8 çул хушши ĕçлет. Вăл комбината килнĕ чухне унăн нимĕнле квалификаци те пулман. Халĕ вăл çменă мастăрĕ. Хăма çуракан цехăн технорукĕ отпуска кайнă вăхăтра Йегорăв йулташ технорук пулса ĕçлеме те пултарчĕ. Вăл цехри рабочисем хушшинче пысăк авторитетлă çын.

Çавăнпа ĕнтĕ Çĕмĕрле суйлав округĕнчи РСФСР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен комиççи членĕсене уйăрма пуханнă рабочисем пурте пĕр сасăпа Çергей Иванăвич Йегорăв йулташа суйлав комиççи членĕ пулма уйăрчĕç. Пысăк хисеп. Йегорăв йулташ çак хисепе чăннипех тивĕçлĕ.

С. Й.

Фашисăма хирĕçле пĕрлĕх фрончĕ

Фашисăм вăл—вăрçă, фашисăм вăл—варвăрствă, фашисăм вăл—выçлăх, çуклăх, халиччен илтмен експлоатаци, усал кайнă террăр, ĕççыннисенчен мăшкăласа кулни. Пĕрлĕх фрончĕ тунипе кăна фашисăма çĕмĕрсе тăкма пулат, — терĕ Коммунисла Интернационалăн VII конгресĕ.

Германипе Итали фашисĕсем тата Йапонин фашисла çар ушкăнĕсем ытларан та ытла агреççивланса пыраççĕ, вĕсен йут çĕршывсене туртса илес ĕмĕтсем кушпа мар, сехетпе ÿсеççĕ. Манчжурине туртса илни тата Китай халăхне хирĕç вăрçни, Абиççинине туртса илни, Австрине туртса илни, Германипе Итали тата Йапони хушшинче пĕр-пĕрипе „Коминтерна хирĕçле“, урăхла каласан, совета хирĕçле пакт туса çирĕплетни, Германипе Итали фашисăмĕ Испани республикине пĕтерсе лартма хăтлани, ССР Сойузне хирĕç урсах хĕçпăшалланни тата вăрçă хатĕрлени—çаксем вĕсем етемлĕхе тĕнчери çĕнĕ вăрçă умне илсе çитерни çинчен калаççĕ.

Фашисăм вăрçа Совет Сойузне хирĕç çеç хатĕрлемест, фашисăм буржуалă демократине хирĕç те поход туса пырат. Фашисăм ĕççыннисен политикăлă пур прависене те тата вĕсен економика йенчен кĕрешсе илнисене те хăрушлăх умне кăларса тăратат.

* * *

Испанире халăх фрончĕ çĕнтернĕренпе икĕ çул та икĕ уйăх иртрĕ. Испанире халăх фрончĕ пулман пулсан, фашисăм Испани халăхне тахçанах çĕмĕрсе тăкнă пулĕччĕ. Вăл халь усăнах курăйат.

Испанири халăх фрончĕ икĕ çула йахăн ĕнтĕ алла хĕçпăшал тытса, Испани фашисăмне çеç мар, тата Италипе Германи фашисăмне хирĕç те кĕрешет. Коммунисла парти ырми-канми ĕçленипе кăна, хăйне пĕр шеллемесĕр ĕçленипе кăна, вăл халăх фрончĕн пуçаракане, ăна чĕрĕ сывлăш парса хавхалантаракане пулса тăрат, дисциплинăлă тата политикă тĕлĕшне ăнланулă çар тума май пулнă. Çав çара халь çĕнĕрен вĕрентсе хатĕрленĕ кĕçĕн, вăтам тата аслă командирсем йĕртсе пыраççĕ.

Испанири халăх фронтĕнче çĕнĕ ĕç пулса тăраканни вăл çакă: социалиссемпе коммуниссем йĕртсе пыракан рабочисен Пĕтĕмĕшлĕ сойузĕ анархиссемпе тата анархо-синдикалиссемпе килĕшÿ туса, анархо-синдикалисла рабочисене çĕршери сывна фашисăма хирĕç кĕрешекен халăх фронтне хутшăнтарнă. Çакă вăл Барçелонăна хÿтĕлес тĕлĕшпе пысăк выран йышăнат, мĕншĕн тесен унта анархо-синдикалиссен тайăмĕ пысăкрах. Испанири çĕкленÿ мĕн тери пысăкки çакăнтан та курăнат: çамрăксен Пĕрлешĕвĕн сойузĕ (унăн ретĕнче 500.000 йахăн член шутланат), хăйĕн членĕсене пурне те çара кайма мобилизациленĕ çинчен пĕлтерчĕ; профсойузсем хăйсен членĕсене 17 çултан пуçласа 45 çул таранхисене пурне те мобилизациленĕ çинчен пĕлтерчĕ.

Испани паттăр халăхĕ фашисла варварсене хирĕç кĕрешме пысăк хастарлăхпа çĕкленнĕ.

* * *

Францири халăх фрончĕ йулашки вăхăта çитиччен фашиссем тапăнса пынипе сирсе пынă. Анчах та Францири финанс тата промышлĕннăç капиталĕн çÿлти сийне хавшатман пирки, халăх фрончĕ пысăк йăвăрлăхсене тÿссе иртерет.

Коммунисла парти çул кăтартса пыракан рабочи класăн активлăхĕ халăх фронтĕнчи тĕп вăй пулса тăрат. Çулталлăк çурă хушшинче пĕрлешÿлĕ профсойузсем 5 хут ытларах ÿснĕ. Пĕрлешнĕ вăхăтра 900.000 член пулнă пулсан, 1938 çул тĕлне 5.000.000 члена çитнĕ.

Шултра буржуази, халăх фрончĕ финанспа економика тĕлĕшĕнче тăвакан ĕçсене пур майсемпе те аркатса пырат: таварсен, апат-çимĕçсен хакĕсене йÿрп ÿстерет, капитала йутçĕршывсене куçарат (80 мĕлйарт франк куçарнă), франк хакне йÿнетет, коллективлă догаварсене пăсат, предприйатисенче ĕçлекен рабочисене ĕçрен кăларат, фашисла организацисене, фашисла заговорщиксене—кагульарсене укçа-тенкĕ парса тăрат.

Францири финанс тата промышлĕннăç капиталĕн çÿлти сийĕсем Франци халăхне хирĕç Италипе, Германипе килĕшÿ тума, Чемберленăн фашиссене майлă, демократине хирĕçле политикине пулăшма йăланах хатĕр.

Халăх фрончĕн вакбуржуалă партийĕсем финанс капиталĕ питĕ хытă хĕснине тÿсеççĕ. Реакци радикал-социалисла партине халăх фронтĕнчен уйăрма тăрăшат.

Францири лару-тăру питĕ йăвăр. Рабочи клас хăй кĕрешсе илнĕ позицисене çапăçусăр парасшăн мар. Буржуази, государствă аппаратĕпе, чиновниксен çÿлти сийĕпе, полиципе, йустиципе усă курса, Франци халăхне хирĕç фашисла заговорщиксен тата провокатăрсен хĕçпăшаллă выступленисене хатĕрлет. Финанспа промышлĕннăç капиталĕн çÿлти сийĕ Францире граждан вăрçи хатĕрлет, ăна тĕрлĕ сăлтавсемпе пуçарма провокацилĕ ĕçсем тăват.

* * *

Китай халăхĕн Йапониййе хирĕçле нацилĕ фрончĕ Йапони агрессăрне хирĕç кĕрешме халăх массине пĕрлештерчĕ. Китай çарĕсен Шаньсири, Шаньдунри çĕнтерĕвĕсем, партизанла йухăм питĕ пысăккăн ÿсни, халăхăн революцилĕ 8-мĕш çарĕн ăнăçулă çĕнтерĕвĕсем Китай халăхĕн паттăрлăхне кăтартаççĕ.

Китайра рабочисемпе хресченсен организацийĕсем пуçланса карĕç. Китайри рабочисемпе хресченсем тата интеллигенци Йапони империалисăмне хирĕç кĕрешсе çĕнĕ Китай тăваççĕ.

Йапони çарĕ хĕçпăшаллă вăй тĕлĕшĕнчен Китай çарĕнчен нумай малта тăрат пулсан та, йулашки вăхăтра Китай çарĕ çиĕле тухма пуçларĕ.

* * *

Англире, Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсенче, Чехословакире, Скандинавири çĕршывсенче халăх фрончĕ халĕ çеç йĕркеленме тытăнат. Германи, Итали, Польша, Румыни, Венгри пек фашисла тата çурмафашисла çĕршывсенче те халăх фрончĕн елеменчĕсем пур.

Нумай социал-демократла партисемпе профсойузсен руководителĕсем пĕрлĕх тата халăх фронтне хирĕç тăраççĕ. II-мĕш тата Амстердамри Интернационалсен руководителĕсем Коммунисла Интернационалпа нимĕнле ĕçе те пĕрле тума килĕшмеççĕ. Ку çеç те мар. Амстердамри Интернационал 1937 çулти ноябĕрте ВЦСПС-па тунă килĕшĕве çирĕплетмен.

Социал-демократилĕ уйрăм партисене йĕртсе пыраканесен реакцилĕ туртăм мĕн пек вăйлине—Германи социал-демократла партин Чехословакири правленийĕ компартипе пĕрлĕх фрончĕ тума килĕшмен факт та лайăх кăтартса парат.

II-мĕш тата Амстердамри Интернационалсен руководителĕсен коммунисăма хирĕçле туртăмне çак факт çирĕплетет. Мартăн 15—16-мĕшĕсенче пулса иртнĕ II-мĕшпе Амстердам Интернационалсен канашлăвĕнче Испани делегацийĕ çак интернационалсем йышăнма шутланă резолюци çумне хушса сĕнÿ панă. Çак сĕнÿре Испани делегацийĕ „тĕнчери пролетарилĕ тата демократилĕ пĕтĕм вăйсене пĕрлештерес“ йенĕпе икĕ интернационалăн та ĕçлемеле тесе хушнă. Çак сĕнĕве хирĕç Ситрин хытă протесленĕ, вăл коммуниссемпе пĕрле ĕçлесси çинчен сăмах та пулма пултараймаст, ку сĕнĕве йышăнни икĕ интернационалĕнче те раскол пулнине пĕлтерет тесе каланă.

Пĕрлĕх тата халăх фронтне хирĕçле кĕрешĕве Англи лейбориссен партине тред-йуниосен реакцилĕ лидĕрĕсем йĕртсе пыраççĕ. Лейбориссен парти ĕçтăвкомĕ: „лейбориссен партийĕ йенче пĕрлĕх фрончĕпе ассоциаци тăвасси çинчен сăмах та пулма пултараймаст“ тесе пĕлтернĕ.

Çак фактсем мĕн çинчен калаççĕ? Буржуалă идеологи, буржуалă политикă хăйĕн аллинче социал-демократлă партисен чылай лидĕрĕсене тытса тăрат. Анчах опыт çакна кăтартрĕ: рабочисемпе ĕççынни массисене коммуниссемпе пĕрле пулса фашисăма тата вăрçа хирĕç активлăн кĕрешме чарма реакцилĕ лидĕрсен вăй çитмест. Англире тред-йунионсен генеральнăй совечĕн председателĕ Ельвин, лейбориссен партин парламĕнтри фракцин лидĕрĕ Еттли Испанине пулăшакан пĕрлĕх фрончĕн конференцине хутшăнни, Англири, Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсенчи, Швецири, Белгири, Данири, Чехословакири, Швейцарири пысăк профсойузсем, социалиссен партин выранти организацийĕсем пĕрлĕх фрончĕн позици çине куçни халăх тата пĕрлĕх фрончĕн йухăмĕ ÿснине кăтартат.

* * *

1938 çулти Майăн 1-мĕшĕ умĕнхи тĕнчери лару-тăру питех те йăвăр.

Фашисла политиксем тĕнчене тепĕр хут пайлама тытăнчĕç.

Çакăн пек лару-тăрура пирĕн социалисăмла тăван çĕршыв—пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен тăван çĕршывĕ—никам пырса тĕкĕнме пултарайман, хăватлă, çирĕп тусăрчĕ пек тăрат.

Пирĕн çĕршыври ĕççыннисемпе, капиталисăмла çĕршывсенчи рабочисем хушшинчи сойуз çирĕп, ăна никам та çĕмĕрме пултараймаст. Сталин йултащ Иванов йулташа панă ответра çырнă: „ССР Сойузĕнчи рабочи клас буржуалă çĕршывсенчи рабочи класпа интернационаллă пролетарилĕ çыхăнса тăрассине вăйлатмала тата тĕреклетмеле; пирĕн çĕршыв çине вăрçăпа тапăнас мĕн буржуалă çĕршывсенчи рабочи пирĕн çĕршыври рабочи класа пулăшассине организацилемелле; пĕр пекех пирĕн çĕршыври буржуалă çĕршывсенчи рабочи пур майсемпе те пулăшассине организацилемеле; хамăрăн Хĕрлĕ Çара, Хĕрлĕ флота, Хĕрлĕ авиацине, Осоавиахима вăйлатни тата тĕреклетни кирлĕ. Нимĕнле „ăнсăртлăх“ та тата пирĕн тулти тăшмансен нимĕнле фокусĕсем те пире кĕтмен çĕртен пырса ан тивчĕр, тесе хамăрăн пĕтĕм халăха вăрçăпа тапăнас хăрушлăх умĕнче мобилизацилĕ хатĕр тытса тăмала...“

Çакна пирĕн, ССР Сойузĕнчи ĕççыннисен нихăçан та манмала мар.

Пирĕн çĕршыва шпионсем йарса тăракан фашисăм совет разведкин вăйне туйрĕ. Фашисăм, вăл пирĕн çĕршыв çине тапăнма хăйулăх тупсан, аслă совет халăхĕн мораллĕ-политикăлă пĕрлĕхĕн пĕтĕм вăйне, хăватлă Хĕрлĕ Çарăн пĕтĕм вăйне туйса илĕ.

Совет правителстви—ĕççыннисен правителстви мирлĕ политикăна çирĕп тытса пырат. Совет Сойуз халăхĕ тăшман пирĕн çине тапăнас мĕн пулсан, ăна çапса аркатма хатĕр.

ССР Сойузĕнче никам та вăрçăшăн мар, анчах фашиссем пире вăрçа кăларсан пурте, пĕр çын йулмиччен вăрçа тухĕç, тăшмана вăл хăй çĕршывран килет çав çĕршыв территорийĕнче çапса хуçĕç

УЙ-ХИР ĔÇĔНЧИ СТАХАНĂВĔЦСЕНЕ—
çураки планне болљшевикла тултарса пыракансене—САЛАМ!

„Сеятель“ колхозăн мухтавлă ĕçĕсем

Кукăр-макăрланса йухса выртакан Тĕплем шывĕн сылтăм хĕрринче „Сеятель“ колхозăн сысна ферми вырнаçса ларнă. Йолшик йаленчен тухса Чемейеле çул тытсан, дачă çурчĕсем йевĕр ларакан çуртсене курмасăр çитес çук. Крым темеле, анчах фермă çумĕпе йухакан шыв—Хура тинĕс мар. Çăнах та, сыснасемшĕн Тĕплем шывĕ Хура тинĕс шывĕнчен те хаклă пуљ. Çутă илемлĕ кун сарă хĕвел те ирхине вĕсен „дачи“ çине пăхса тухать. Вара кун каçах хăйĕн пайăркисене ним шеллемесĕр фермă çине тăкать. Тĕплем шывĕн кăпка çыранĕсем хĕррипе кăçал тусланнă хĕрпе каччă пек „Ђурăпа“ „Трактăр“ васкамасăр утса çӳреççĕ. Хĕвел хытрах пĕсертме тытăнсанах пĕве шывĕ хĕрнерех пăрăнаççĕ. Шыва кĕрсе тухнă пек тусан, кушак хăлхисем чухлĕ сарăлнă клевĕр çулçисене çиме ана çинеле хăпараççĕ. Вара каллех шыва, каллех тăва...

Хаљ ĕнтĕ Чемейри „Сеятель“ колхоз членĕсем çеç мар, таврари колхозниксем те, район та ку фермă лайăххипе мухтанаççĕ. А тăват-пилĕк çул кайарах çеç вĕт, „Сеятель“ колхозăн уйрăм членĕсем:

— Кирлĕ мар сыснасем, хамăра та çисе пĕтереççĕ вĕсем,— тетчĕç.

Чăн пурнăç çав сăмахсене кутăнла çавăрса пăрахрĕ. Вĕсенчен хаљ фермă усăллă пулни çинчен мухтаннă сăмах кăна илтме пулать. Председатĕл отчот тунă чухне те фермă çинчен асăнмасăр иртсе кайаймасть. Виçĕм çулхи отчотра фермăран 19 пин те 720 тенкĕ илнине кăтартса панă. Иртнĕ çулхи отчот тăрăх вăтăр виçĕ пин те 197 тенкĕ те 29 пус пулнă. Докладчик çитес отчотра татах пысăкрах укçа кăтартма ĕмĕтленнĕ.

— 1938 çулта 21 амаран 250 çурă илме шутлатпăр,—тенĕ вăл.

Пайана, председатĕл: шутлатпăр, тенĕ сăмах пурнăçа кĕрсе те çитет.

— Есĕ хăть кирек мĕнле ĕçе ил, ăна лайăх тусан лайăхах тухать,— тесе калаçса тăчĕ пĕрречĕн „Сеятель“ колхоз ферминче ĕçлекен бригадирпе сысна курма пынă шурă сухаллă, кăвак çӳçлĕ мучи.

— Çук мучи, пирĕн хаљ лайăх çеç ĕçленипе сахал, „отлично“ ĕçлемеле. Ĕçе çамрăк чух хитре хĕре йуратнă пек йуратмала,— тет ăна хирĕç Леонтий Васильевич. Мучи кукăр чăпăклă чĕлĕмне çăварĕнчен кăларсах сăмăллăн кулса илчĕ. Мучийе фермăри тасалăх та, çуталăх та пит тĕлĕнтерчĕ. Пуринчен ытла вăл „Трактăртан“ тĕлĕнчĕ. Виç-тăват хутчен вăл:

— Пĕр сысна 426 кило... 426 кило—25 пăт çурă. Лашаран та йăвăртарах...—тесе кăвакарнă сухалне ывăçла-ывăçла вăраххăн сăтăрса антарчĕ...

— Кăçал вăл 250 çурă ашшĕ пулать,—тет Леонтий.

— Икçĕраллă çурăн ашшĕ (?!)— татах тепĕр хут калана мучи.

Мучи валљи çеç мар, нумай сысна фермисем валљи ку фермăра вĕренмелисем пур. Хăш чух фермă пуçлăхĕ Андрейĕв йурийех перекличкă пекки туса иртерет.

— „Трактăр“! тет вăл.

— Нĕрĕх! — ответлет „Трактăрĕ“.

— „Ђурă“!

Вăл та нĕрĕклетет, ыттисем те. Перекличкă иртсен вăрахăн утса утă çаранĕ пек симĕс выртакан клевĕр ани çине çиме саланаççĕ. Кунта çӳренипе çеç мар, кунне вĕсем тата виççĕр хут апат илеççĕ, вараланса 2—3 хут тасалаççĕ.

— Сысна кĕмĕл тĕслĕ курăнсан лайăх ӳсет, пысăк пулать,— теççĕ „Сеятель“ колхоз ферминче ĕçлекенсем. Калас пулать, Чемей колхозникĕсем колхозра çеç мар, колхозниксем хăйсем те пурте пекех таса ăратлă сыснасем усраççĕ. Фермăра ĕçлекен Леонтин хăй килĕнче виçĕ сысна, кашни вĕсем 200-шер килограм йе ытларах тайаççĕ.

— Аш çеç мар, епĕр салă та пит йурататпăр, çавăнпа та сыснасене ытларах усрама тăрăшатпăр,—тет Леонти арăмĕ Дуњă, илемлĕн кулкаласа.

Фермăра ĕçлекенсем кунта сыснасене пăхма çăнахах та пит маçтăр, çавăнпа пĕрлех хăйсене хăйсем пăхма та лайăх пĕлеççĕ. Сыснасене лайăхрах пăхма вĕренмели кĕнекесем, журнасем тăраççĕ. Кашнине валљи уйрăм койкă, алшăллисем, умываљник те, урайсем те тап таса.

Ĕç пĕтерсен вĕсем хăйсен пĕлӳлĕхне хăпартма кружокра вĕренеççĕ. Кружока йертсе пыраканĕ Йакăвлĕв Йегор, кăçал районри колхоз шкулĕнчен вĕренсе тухнăскер, мĕн пур вăйне хурса ĕçлет. Пушă вăхăт фермăра ĕçлекенсен пĕртте ахаљ иртмест, хаçат-журналсене кулленех вулаççĕ вĕсем.

— Петĕр, кил сана „хупам“,— тет вăра Леонти шашкăла выљас шут килсен.

— Тавай, кам-кама? Йапонцăсем те малтан китайцăсене: „парăнăр“, тесе алăсене çӳлеле тăратма ыйтрĕç те, а хаљ ăçтала тарма çул тытаççĕ? - тесе хурать Петĕрĕ ăна хирĕç.

Пĕр сехет иртет, иккĕ, виççĕмĕш сехетре фермăри ĕçлекенсем каллех хĕрӳлĕ ĕçре. Каллех социалисăмла ăмăрту догаварĕн пунктисене пурнăçлас ĕçре.

Çеменăв Петĕр пăхакан сысна аминчен пĕлтĕр çулталăк хушшинче 24 çурă ӳстернĕ пулсан, кăçал Петĕр 26 çурă ӳстерешĕн. Пĕлтĕр Леонти пăхакан амаран 23 çурă илнĕ пулсан, кăçал Леонти Петĕртен те иртсе кайасшăн.

Фермăра ĕçлекенсен пурин те пĕр шухăш—куллен çĕнĕ çитĕнӳсем туса пырасси. Çавăнпа та ĕнтĕ колхоз председателĕ Данилăв йулташ çĕнĕр н те çĕнĕ ӳсĕмсем кăтартакан цифăрсемпе доклад туса парать.

Вир Мĕтри.

Тĕш тырăсене акса пĕтерчĕç

ШĂНКĂРТАМ. (Телефон тăрăх). Апрелĕн 28-мĕшĕ „Искра“ тата Нариман йачĕпе тăракан колхозсем социалисăмла ăмăртса ĕçлесе пырса тĕштырăсене акса пĕтерчĕç. „Искра“ колхоз 4 кунра акса пĕтерес вырăнне 3 кунрах акса пĕтерчĕ. Нариман йачĕпе тăракан колхоз тĕштырăсене 6 кунра акса пĕтерме палăртнă пулнă. Бригадăсем ĕç пахалăхĕшĕн тăрăшса ăмăртса ĕçленипе 5 кун хушшинче ак а пĕтерчĕ. Ку колхоз сĕлĕ 99,4 гектар, тулă 78,96 гектар, утăлăх викă—15 гектар акнă.

Çуракинчĕ колхозра çĕнĕрен стаханăвĕцсем çитĕнчĕç. Сабирăв колхозник икĕ касăлă плугпа сухаласа нормăна кашни кун 200-шер процент тултарса пычĕ. 11 ретлĕ çейăлкăпа акакансем—Кафурăв йулташ—200 процент, Балахăв—180 процет таран тултарса пычĕç. Сӳрекенсенчен Михейĕвă кашни кунхи ĕç нормине 210-шар процент тултарчĕ.

Халĕ колхозра хире тата пахчара çĕрулми лартмали вырăнсене сухалаççĕ. **Гер. Иванов.**

ТУРХАН. (Телефон тăрăх). „Совет“ колхозра тĕштырăсене акса пĕтерчĕç. Колхозра сĕлĕ—17 гектар, тулă—14 гектар, утăлăх викă—8 гектар акнă. 9 ретлĕ çейăлкăпа 4,5 гектар акмала пулнă пулсан, Упасăв 7-шер гектар акрĕ. Çакăн пекех „Путь социализма“ колхозра та тулă, сĕлĕ, викă акас плансене пурнăçланă. Районри ытти колхозсем те тĕштырăсене кĕске срукра акса пĕтерес тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлеççĕ. **Иванов.**

Автомашинăсем туйанчĕç

Йĕрмашкă (Вăрнар р.) йалсовет не кĕрекен „Трактăр“, Калинин йачĕпе тăракан колхозсем государствăна аш-какай сутса пĕрер грузовой автомашинă туйанчĕç. Калинин йачĕпе тăракан колхоз çак кунсенчех тепĕр автомашинă туйанать. **А. Ашмарин.**

К ЗАЩИТЕ СОЦИАЛИСТИЧЕСКОГО ОТЕЧЕСТВА—ВСЕГДА ГОТОВЫ!

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Н. Жукăв художник ӳкернĕ плакат. „Социалисăмлă тăван çĕршыва сыхлама йаланах хатĕр“. Ку плаката ИЗОГИЗ Май уйавĕ тĕлне кăларнă.

Сойузфото репродукцийĕ.

Вăл инженер пуласшăн

Производствăлă канашлу вăрăма тăсăлнă пирки Шурă ĕçрен часах таврăнаймарĕ, сакăр сехет тĕлне çеç çитрĕ.

Пит-куçне çуса тасатсан йаланхи пекех хаçатсем вулама тытăнчĕ. Арăмĕ самовар лартрĕ.

— Тĕлĕнмеле. Пăхха, кам çинчен хаçат çине çырнă. Квалификацилĕ рабочисем иккен. Стаханăвĕцсем, нормăна 400 процент тултараççĕ. Маттур!—хăй тĕллĕн калаçса илчĕ Шурă хаçатăн виççĕмĕш страницине уçса.

Калаçăва арăмĕ те хутшăнчĕ. Камсем çинчен çырнине ыйтма пуçларĕ.

— Есĕ пĕлейместĕн. Ĕлĕк тăлăххăн пурăннă вĕсем,— ответлерĕ Шурă.

Самовар вĕреме пуçларĕ. Йĕкĕ çамрăк апата ларчĕç. Радио музыкă выљать. Урамра кăнтăрлахи пекех çап-çутă. Лăпкă çил чӳрече çинче ларакан чечексем хушшипе хумханса кĕрсе, пит-куçа çепĕçĕн ачашлать.

Савăнăçлă, телейлĕ пурнăç çинчен хывнă йурă сасси вăйланнă çемĕн вăйланнăн туйăнать.

* * *

Хăйĕн ĕлĕкхи пурнăçĕпе хаљхи пурнăçне танлаштарса пăхать те, тĕлĕнет вара Шурă. Пысăк улшăну пулнă унăн пурнăçĕнче çак 5—6 çул хушшинче. Хут сахал пĕлекен çын пулнă. Професси те пулман унăн. Тăрăшнă; вĕреннĕ вăл, вара машинис пулнă.

Анчах уншăн машиниса тухни çителĕклĕ пулман. Унăн татах ӳсес, вĕренес кăмăлĕ йаланах асра тăнă. Вăл каçхине вĕреннĕ, кăнтăрла ĕçленĕ. Калас пулать, ĕç çине нихăçан та йĕрĕнсе пăхман, тума хушнă—тунă, пĕр минут та вăхăта вăраха хăварман.

Çулталăк çурă кайала електростанци начаљникĕ Шурăна хăй кабинетне чĕнсе илнĕ те, чылайччен калаçса ларнă. Вăл Шурăран ăçта çуралса ӳснине, кунта йепле килнине, мĕнле ӳссе пынине тата хăйĕн специаљнăçĕ çине мĕнле пăхнине ыйтса пĕлнĕ. Çавăн хыççăн ăна механик помошникĕ туса хунă.

— Пултарăп-ши епĕ унта ĕçлеме?—ыйтнă Шурă.

— Пĕлмесессĕн ыйтăн. Вĕрентĕпĕр,—ответленĕ начаљник.

Çакăнтанпа вăхăт шăпах икĕ çул çитрĕ. Икĕ çул ĕнтĕ Шурă механик помошникĕ пулса ĕçлет, вăлăх машинă цехĕнчи бригадир. Бригадă малта пыракансенчен пĕри шутланать. Вăл рабочисене те хăйех вĕрентсе çитĕнтерет. Акă масљонщикра ĕçленĕ Алексейĕв йулташ халĕ машинисра ĕçлет, машинис пулма вĕренекен Слепцов та машинис йатне илчĕ. Тата темиçе вуншăр çын çак çулсенче квалификацилĕ рабочисем пулчĕç.

Шурă хăйне хăй нихăçан та ырламасть — те мухтанать тесрен те йăли çавăн пек. Калаçнă чухне те сăмаха ытлашши ваклама йуратмасть.

— Хамăрăн ĕçе пурнăçласси вăл—пирĕн тивĕçлĕх, — тет вара вăл, ĕçлени çинчен калаçма пуçласан.

Пĕррĕмĕш квартăл планне унăн бригади 101 процент ытла тултарчĕ. Çунтарма и йапаласене перекетлессипе, аварипе простой тăвассине пĕтерессипе те пысăк çитĕнӳсем тунă. Анчах çапах та вăл кунпа чарăнса лармасть, иккĕмĕш квартăлта та лайăх, тухăçлă ĕçлеме обйазатĕлеству илчĕ. Шчелчков йулташ бригадипе ăмăртăва тухрĕ.

Тухăçлă ĕçлет, çав вăхăтрах вĕренет тата çынсене вĕрентет. Часчасах рабочисене хăйĕн опычĕсем çинчен каласа парать. Рабочисем ăна йурataççĕ. Вăл хăй те вĕсемпе çемçен, туслăн калаçать. Рабочисене хаçатсем вуласа ăнлантарать.

Шурă Филиппăв механик пулнипе те çураçмасть, вăл конструктăр, инженер пуласшăн. Ку—пурнăçлă ĕмĕтсем.

Хар. Лисин.

Çамрăк стаханăвĕц

Рабочисем ĕç пĕтерсе килĕсене саланнăранпа чылай вăхăт иртнĕ. Анчах Аљошă Петров цехра çамата йăвалакан станок патĕнчех тăнă. Инструментсене аллине илсе çаврăкаланă йе тата куçне илмесĕр станок çине чылайччен пăхса тăнă. Вăл вĕреннĕ.

Тĕлĕвмеле хăвăрт улшăнать пурнăç. Тăвăллă хăвăртлăхпа çĕкленет социалисăмла чаплă пурнăç. Çĕнелеççĕ, ӳсеççĕ çынсем те. Детkomиççин Шупашкарти хăпрăкне сакăр уйăх кайарах пырса кĕнĕ Аљошă Петров та халĕ ĕç çине çĕнĕлле пăхма, пурнăçа куљтурăлă йĕркелеме вĕреннĕ çĕнĕ çын. Унăн хаљхи ĕçĕнче, пурнăçĕнче çĕнĕ, куљтурăлă йăла çирĕпленнĕ.

Кăçал, техникăна алла çавăрса илнĕ май, Петров йулташ уйăхран уйăха çĕнĕ ӳсĕмсем туса пыма пуçларĕ. Вăл йанварти плана 155 процент, февраљте—158,8 процент тултарнă пулсан, апрелти плана 174,5 процент тултарнă. Çавна май унăн ĕçукçийĕ те малтанхинчен икĕ хут ытла ӳснĕ. Иртнĕ çулта уйăхра 120—160 тенкĕ илнĕ пулсан, кăçалхи март уйăхĕнче 447 тенкĕ илчĕ.

Аљошă Петров Пажугинпа ăмăртса ĕçлет. Вĕсем иккĕшĕ те пĕр цехра ĕçлеççĕ. Ăмăрту догаварĕ тăрăх, вĕсем кашни кун 35 мăшăртан кайа мар çамата туса кăлармала. Петров йулташ çак апрел уйăхĕнче куллен 50-шер мăшăр туса кăларма тытăнчĕ. Брак пулмасть. Ĕç вырăнне таса тытать. Халĕ вăл ĕçĕн хăшпĕр процесĕсене улăштарса, çменăра 65 мăшăр çамата тума шутлать. Паллах, ку ĕмĕт пурнăçлă. Мĕншĕн тесен уншăн ĕçлев чи паха чыслăх, тивĕçлĕх пулса тăрать. Мĕн чухлĕ лайăх ĕçлетĕн, çавăн чухлĕ пурăнма савăнăçлă.

Акă Аљошă ĕçрен таврăнать. Килте пӳрт-çурт таса. Аљошă костюмне тăхăнать те апатланма столовăйне кайать. Унтан вуламалли çурта йе хĕрлĕ кĕтесе.

Пурăнма та ĕçлеме те аван пирĕн телейлĕ те савăнăçлă совет çĕршывĕнче. Çитес çулсенче Аљошă Петров аслă шкула вĕренме кайма шутлать.

ХИСЕПЛĔ ГРАЖДАНИН

Турханти почтă уйрăмĕ урлă вăл кунхине вата учитĕл латне нумай телеграмсем килчĕç. Кăмăллă, кăмăллă та ăшă сăмахсемлĕ телеграмсем:

„Пайан, есĕ учитĕл ĕçĕнче ĕçлеме пуçланăранпа 40 çул тултарнă кун, сана пĕтĕм чĕререн саламлатпăр, тата нумай-нумай çулсем хушши пурăнма сывлăх сунатпăр“.

Ку телеграм айне парти райкомĕпе райĕçтăвком алă пуснă.

„Сана, хама вĕрентсе çитентернĕ хаклă йубиљара, чунтан-вартан савса саламлатăп“.

Ку телеграм айне Мускавра ĕçлекен доцент алă пуснă.

„Хаклă атте! Пайан сампа пĕрлех епĕ те пысăк хавхаланупа çĕкленсе савăнатăп. Ырлăх-сывлăх сунатăп“.

Ку телеграм айне йубиљарăн аслă хĕрĕ Иринă, Крымра ĕçлекен учителница, алă пуснă.

„Пайан хăвăнпа пĕрле пулманшăн ан пăшăрхан, атте. Пысăк салам. Халăха çутта кăларас ĕçре нумай усă панă, халăх хисепне чăн тивĕç илме пултарнă ĕçлĕ аллăна хыттăн-хыттăн чăмăртатăп“.

Ку телеграм айне йубиљарăн ывăлĕ Мишă, Ленинград çар округĕнче ĕçлекен лейтенантсенчен пĕри, алă пуснă.

„Чи хĕрӳлĕ, чĕре патĕнчи ăшă сăмахлă салам сана, ыра атте“.

Ку телеграм айне йубиљарăн хĕрĕ Каппă, Шупашкарти педагогикă институтĕнче вĕренекен студенткă, алă пуснă.

Татах та нумай телеграмсем. Иртен пуçласа каçченех килнĕ вĕсем. Ку вăл 1936 çулхи çуркунне пулса иртнĕ. Çав кунхине Аслă Арапуç йал халăхĕ хăйĕн гражданинне, Гаврил Виктăрăвич Виктăрăв йулташа, вăл шкул ĕçĕнче ĕçлеме пуçланăранпа 40 çул тултарнă йатпа тивĕçлĕн чысланă. Ун йачĕпе пухăннă савăнăçлă каçра çамрăксем çеç мар, Виктăрăва мĕн ачаранпах пĕлекен ватă çынсем нумай-нумай тухса калаçнă. Вĕсем пурте йубиљар утса тухнă иртнĕ кунçула тепĕр хут куç умне кăларса тăратнă. Вĕсем пурте йубиљарăн чыслă ĕçне мухтанă. Вĕсем пурте пайаншăн, пайанхи çутă кунщăн йубиљарпа пĕрлех хавхаланса савăннă.

— Епĕ нумайах каласа тăмастăп,—тенĕ йубиљар, хăйĕн ответлă сăмахĕнче.—Епĕ калас сăмахсене кунта ĕнтĕ нумайăшĕ каларĕç. Мана, манăн ĕçĕмсене халăх хак парса, çапла чысланăшăн йепле хавасланнине мĕнле сăмах тупса мĕнле еп калам-ши? Паллах, çакă чысшăн сăмахпа мар, ĕçпе ответлесĕн татах та лайăхрах пулĕ. Ĕçлĕп. Ĕçшĕн вăйăма хĕрхенмĕп. Хамшăн мар пайан еп, хам вĕрентсе кăларнă çамрăксемшĕн пуринчен те ытларах хавасланатăп. Манăн алă витĕр ку тарана çитсе пин çын ытла тухнă. Вĕсенчĕн хаљ нумайăшĕ аслă шкул пĕтернĕ: йе доцент, йе инженер, йе техник, йе врач пулса тĕрлĕ хуласемпе тĕрлĕ йалсенче ĕçлеççĕ. Мана манмаççĕ вĕсем. Хисеплеççĕ. Тавтапуç вилĕмсĕр халăха! Халăхăн хисепĕнчен хаклă нимĕн те çук. Çав хисепе тивĕçлĕ пулма пултарнишĕн епĕ хĕпĕртетĕп. Тавтапуç тăван çĕршывăма! Аслă çĕршывăн тивĕçлĕ гражданинĕ пулнинчен хаклă нимĕн те çук. Тавтапуç Аслă Сталина! Вăл пирĕн хĕвел. Вăл пирĕн телей. Пĕтĕм пурнăç вăл пирĕн!

Çăмăл мар пулнă Виктăрăвăн иртнĕ кунçулĕ. Чухăн хресчен çемйинче çуралса ӳснĕскер, ачалах хурăна шурра тӳснĕ.

—Мĕнле пурнăпăр-щи капла?—тенĕ ăна ашшĕ.—Кам патне те пулсан тарçă пулса ĕçлеме кĕртес мар-ши сана?

—Вĕренесчĕ манăн,—тенĕ çамрăк ача.—Шкула çӳресчĕ.

Аслă атте ача шухăшне хирĕçлемен. 10 çулхи Гаврил шкула çӳреме пуçланă. Малтанласа йалти карăçăварсем сахал мар мăшкăласа кулнă унран: „Пăхăр-ха, тăслан-кă! Мĕн вăрăмĕш хăй, пĕррĕмĕш класра вĕренет. Ĕçсĕр аптăранă штољĕ?!“ Гаврил никам сăмахне те пăхман. Нимĕнле кулăран та вăтанса тăман вăл. Унăн вĕренӳри пултарулăхĕ малтанхи çулхинех паллă пулнă. 14 çулхи Гаврил йалти шкула пĕтерсе мухтав грамати (похвальный лист) илсе тухнă. Ачана малала ăçта вĕренме йарасси çинчен ашшĕ нумай шухăшланă. Пĕринче çапла йалти пуп пырса кĕнĕ ун патне...

—Сан ачун тăнпуçĕ питĕ пысăк, епĕ ăна лайăх пĕлетĕп, — тенĕ пуп.—Хусана, духовни çеминарине йарар мар-и? Унта вĕренсе тухсан, вăл чаплă пуп йе архиерей те çăмăлăнах пулма пултарĕ. Вăл çеминарине кĕретех. Характеристикине хамах çырса паратăп.

Гаврил ашшĕ пупăн сăмахĕсемпе килĕшме пултарайман. Хăйĕн ачине вăл учителсем хатĕрлекен çеминарине леççе хăварнă.

Çеминарине пысăк çитĕнӳсемпе вĕренсе пĕтернĕ Гаврил. 1896 çулхине вăл учитĕл йатне илнĕ. Аслă Арапуçĕнчи хресчен ачисенчен унсăр пуçне, вăл вăхăтчĕн пĕр учитĕл те пулман.

Виктăрăв йулташ 1917 çулченех, пĕр улшăнмасăр, Чăваш Тимеш йалĕнчи шкулта (Йĕпреç р.) ĕçлесе пурăннă. Револљуци вăхăтĕнче вăл йалти чи лайăх активиссен ретне тăнă. Комбед ĕçне йĕркеленĕ. Фронта тырă, тумтир, ашкакай парса пулăшас ĕçĕн организатăрĕ пулнă. Тимеш çыннисем ăна халиччен йуратса, ăшă кăмăлпа асăнаççĕ. „Авă, теççĕ вĕсем, Гаврил Виктăрч чĕртнĕ сат пахчи ку“. Виктăрăв йулташ Тимеш шкулĕн пахчине питĕ пысăк сат чĕртсе хăварнă.

1921—1922 çулсем. Ку çулсем Атăл тăрăхĕнчи халăхсемшĕн йăвăр çулсем пулнă. Выçă, ашшĕ-амăшсемсĕр йулнă ачасене—100 ача ытла пуçтарать Виктăрăв. Ачасене пурăнма, вĕренме çурт кирлĕ. Çурт çук. Çармăс йалĕ патĕнчи мăнастирте пĕтĕм таврари халăха улталаса пурăнакан манашкăсене хуса кăларасси çинчен уйесĕçтăвком умне ыйту лартать вăл. Ыйту усăлăн пурнăçланать. Вара Виктăрăв тăлăх ачасемпе пĕрле мăнастир çуртне куçать. Кунта вăл 1926 çулчен коммунăн директăрĕ пулса, ачасене воспитани парса пурăнать.

Виктăрăв йулташа Аслă Арапуç шкулĕн ĕçĕсене йĕркелеме куçараççĕ. Кунта пайан кунченех преподаватĕл пулса ĕçлет. Виктăрăв—активис, обшчĕствăлă ĕçе чĕререн туса пыракан çын, Арапуçĕнчи колхоз организатăрĕ. Чăваш республикĕн чи вырăнти промышлĕннăçăн чи лайăх ĕçлекен предприйатисенчен пĕри пулса тăракан Арапуçĕнчи крахмал савăтне туса çитерес ĕçре те Виктăрăв сахал мар вăй хунă.

Пур çĕре те ĕлкĕрет ватă учитĕл. Халăха вĕрентет вăл, халăхран вĕренет. Çавăнпа ăна итлеççĕ, ăна йурataççĕ.

П. Митта.

Мала тухнă колхозсемпе колхоз членĕсем

ПАТĂРЙЕЛ, апрелĕн 30-мĕшĕ (телефонпа, хамăр корр.) Майăн 1-мĕшне районра „Хĕрлĕ Туçа“, „Ленин йалавĕ“, „Ырлăх“, „Октăбĕр йалавĕ“, „Çăлтăр“, „Канаш“, тата Розă Љукçембург, Буденнăй йачĕпе тăракан колхозсем пĕрчĕлĕ тырăсене акса пĕтерчĕç.

Çак колхозсенче социалисăмла ăмăртăва лайăх организациленĕ, чылай колхозниксем стаханăвла ĕç тĕслĕхне кăтартрĕç. Акă, Анат Туçари „Çăлтăр“ колхозра плугпа ĕçлекенсенчен В. Пласкин 2-шер гектар, Г. Перепелкин 2,1-шер гектар, Г. Коробкин—1,95 гектар, Н. Вороновский—1,90 гектар, Ар. Кузнецов—1,85 гектар, И. Козлов—1,80 гектар сухаласа пычĕç.

Çейăлкăпа ĕçлекенсенчен Ф. Заплаткин, Т. Плешков 6,8 шер гектар, Ф. Рыбаков, М. Перепелкин тата М. Племковпа Кудрйавцев 8,5 шер гектар акса пынă. Сӳрелекенсенчен П. Перепелкин 11-шер гектар, Т. Рыбаков 9-шер гектар сӳренĕ.

Çапла ĕçленипе пайан куна колхоз кантăрпа çĕрулмисĕр пуçне ытти тырпулсене пурне те акса пĕтернĕ.

„Канаш“ колхозра та çураки ĕçĕсене пысăк пахалăхпа туса иртернĕ. Вăрлăхсене пĕтĕмпех йаровизацилесе акнă. Суха тунă çĕрте ĕçленĕ колхозницăсенчен О. Маçакова, М. Йуманăвă тата К. Йарзовă кунне 2-шер гектар сухаласа пынă. **Н. Пушкин.**

САВĂНĂÇЛĂ ĔÇ

Комбинатăн столљарнăй цехĕ чи шавлă цех. Кашни станок хăй майлă сас парать. Акă торцоваљнăй станок. Вăл çинçерех сасăпа уççăн йанраса тăрать. Унăн патĕнче ĕçлекен Каçйанăвă Верă, станок касакан йăвăççене пысăк йешчĕке пуçтарать, ĕлĕкхи пекех хăйне хăйула тыткалать.

Вăл пĕтĕм комбиначĕпе паллă стаханăвка пулса тăчĕ. Пысăк хисепе тухрĕ. Кăçал апрелĕн 8-мĕшĕнче нормăна 557 процент тултарса нумайăшне тĕлĕнтĕрнĕ.

— Пултарать те вĕт ĕçлеме,— тенĕ рабочисем. Анчах Каçйанăвашăн нормăна 557 процент тултарнинчен тĕлĕнмели те çук пек туйăннă. Тăрăшса тата ĕçĕн мелне пĕлсе йĕркеллĕн ĕçлесен кашнийех çавнашкал ĕçлеме пултарать.

— Чĕрĕ таварсем пĕрмай çителĕклĕ парса тăрсассăн 600 процента çитерме пултаратăн,— тет вăл кашни кун мĕнле ĕçленине кăтартакан хăма çине кăтартса.

Каçйанăвă лайăх ĕçленишĕн унăн тантăшĕсем те савăнаççĕ, ăна хаваласа çитме тăрăшаççĕ. Каçйанăвă вĕсене пулăшать, хăйĕн ĕç меслечĕсем çинчен каласа парать.

— Хăш чухне чăрмантарас текенсем те пур, анчах ним те тăвайmaççĕ,—тет савăнăçлă ĕçĕн тивлечĕпе хавхаланнă Каçйанăвă,—мана парти организаци пулăшать, мана дирекци пулăшать, мана пĕтĕм стаханăвĕцсем, рабочисем пулăшаççĕ. Епĕ пĕччен мар, пирĕн йыш пысăк. **Ç. Йалавин.**

Выçлăх, çуклăх, ĕçсĕрлĕх тĕнчинче...

Капиталисăмлă çĕршывсенчи ĕçсыннисен пурнăçĕ йăвăр та кичемлĕ. Тĕнчери економикăлă çĕнĕ кризис ӳссе пырать. Капиталиссемпе помещиксем çав кризисăн пĕтĕм йăварлăхне ĕçсыннисем çине йăвантарма тăрăшаççĕ.

Уйрăмах фашисла çĕршывсенчи, Испанипе Китай халăхне хирĕç вăрçакан çĕршывсенчи—Германири, Италири, Йапонири ĕçсыннисем йăвăр пурнăçпа пурăнаççĕ.

* * *

Гитлĕрла диктатурăн тискер режимĕ Германири ĕçсыннисене калама çук асаплă пурнăçа кĕртсе ӳкерчĕ. Фашисла государствă пуçланнăранпа пилĕк çул хушшинче Германири рабочисен пурнăçĕ 25 процент начарланнă. Çав вăхăтрах хресчен тупăшĕ 30 процент чакнă. Йулашки çулсенче Германире акмали çĕр талкăшĕ мĕлйун çурă гектар сахаланнă. Тырпулсене вăрçăччenхинчен 20 процент сахалрах туса илеççĕ. Германире ĕçсĕр тăрса йулнисем 2 мĕлйун шутланаççĕ.

Германи фашисĕсем ĕçсыннисене, пуринчен ытла, çĕр улмипе, кавăнпа, сĕлĕ кĕрпипе, йасмăкпа тăрантарма тăрăшаççĕ. Çăкăр, çу тата аш-какай çийессине пур майсемпе те чакарсах пыраççĕ.

Фашисла Германи тăвакан расхутсенчен иккĕ виççĕмĕш пайĕ вăрçа хатĕрленес çĕре кайать. Фашисла Германири ĕçсыннисене пурăнма йăвăр. Çав хушăрах капиталиссен тупăшĕ Гитлĕр пилĕк çул хушши пуç пулса тăнă вăхăтра 40 процент ӳснĕ.

Фашисла Итали индустрилĕ центрĕсенче тĕлĕнмеле çуклăх пуç пулса тăрать. Промышлĕннăç рабочийĕсен ĕçукçине йулашки иккĕ çул хушшинче çенĕрен 16 процент чакарнă. Италин промышлĕннăçлă чи пысăк центрĕнче—Милан хулинче апат-çимĕç продукцисем йулашки виçĕ çул хушшинче çурри-не йахăнах чакнă. Хаксем хăпарсах пыраççĕ. Йулашки иккĕ çул хушшинче продуктăсен хакĕ 30 процент ӳснĕ. Италире ĕçсĕр тăрса йулнисем 2 мĕлйун шутланаççĕ.

Китай халăхне хирĕç вăрçма Йапони империалисăмне кунне 15 мĕлйун ийенă ларать (пĕр ийенă—1 тенкĕ те 54 пус). Вăрçа кайакан çак калама çук пысăк расхут пĕтĕмпех рабочисемпе хресченсем çине ӳкет, ĕçкунĕ пĕр майах вăрăмланса пырать. Хаљхи вăхăтра вăл 10 сехет ытла шутланать. Иртнĕ çулхи ийуљ уйăхĕпе танлаштарсан, пурнăç 30 процент хакланнă. Хресченсенчен виççĕмĕш пайĕн пачах çĕрсем çук. Пурнăç чăтма çук йăвăр пулнă пирки, иртнĕ çулта 30 пин çын хăйсене хăйсем вĕлерпĕ.

Хаљхи вăхăтра тĕнчери капиталисăмлă чи пысăк çĕршывра— Америкăри Пĕрлĕшӳлĕ Штатсенче ĕçсĕр тăрса йулнисем 14 мĕлйун шутланаççĕ. Пĕтĕмĕшпе илсĕн, ĕçсĕр тăрса йулнă рабочисем 30 процента йахăн шутланаççĕ. Ĕçсĕр тăрса йулнисем государствăран пособисем илеймеççĕ, вĕсене хăйсем çине çеç шанма лекет. Çĕршыври производствăна пĕтĕмĕшпе илсен — Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсен, суту-илӳ министерстви кăтартнă тăрăх—1938 çулхи пĕрремĕш квартăлта, иртнĕ çулхи çав квартăлтипе танлаштарсан, 30 процент чакнă.

Англире ĕçсĕр тăрса йулнисем 2 мĕлйун шутланаççĕ—вăл пĕр çул кайарах пулнинчен 250 пин çын нумайрах. Чи кирлĕ çимĕçсен хакĕсем уйăхсерен ӳссе пыраççĕ.

Полљшăра 1 мĕлйун ача шкул тулашне тăрса йулнă. 16 пин учитĕл ĕç тупаймасăр асапланаççĕ. Полљшăри мĕлйун çурă рабочи ĕçсĕр тăрса йулнă. Çак цифăрсем фашисла Полљшăн шалти пурнăçĕ йăвăррине уççăн кăтартса параççĕ. Йалсенче—хăрушă çуклăх тата куљтурăсăрлăх. Полљшă хресченĕшĕн çимели тăвар та ытлашши капăр йапала пулса тăрать. Çынсĕм туберкуљоз чирĕпе вилесси йенчен Полљшă тĕнчере пĕрремĕш вырăн йышăнать.

* * *

Хĕрĕх тăххăрмĕш Май уйавне капиталисăмлă çĕршывсенчи ĕçсынни массисем интернационаллă пĕр шухăшлăн пулнипе, капиталисăма хирĕç хăйаррăн кĕрешес паллăпа иртереççĕ.

Вăрçа тата фашисăма хирĕç, миршĕн, демократилĕ ирĕклĕхсемшĕн, социалисăмшăн кĕрешекен халăх фрончĕн хăватлă пĕрлĕхне тăвас тĕлĕшпе ĕçсыннисен массăлă йухăмĕ пĕтĕм тĕнчипех сарăлса пырать.

Испани бойецĕсен, пĕтĕмпе 5000 çын, пăлхавçăсен аллине лекес мар тесе ирĕксĕр Франци чикки урлă каçса кĕмеле пулнă.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Испани бойецĕсем Лӳшонран (франко-испани чикки) Испанине республикăлă çар ретне тăма таврăнаççĕ.

(Сойузфото).

Германире тир-сăранпа атă-пушмак промышлĕннăçĕн производстви нумай чакнă

ПРАГА, апрелĕн 28-ш. (ТАСС). „Нейе Форвертс" хаçат: Германири тир сăранпа атă пушмак промышлĕннăçĕн продукцийĕ питĕ хытă чакни—вăл ĕçхалăхĕ тавар илме пултарни тăтăшах чакса пынипе пулнă тесе пĕлтерет. Атă-пушмак промышлĕннăçĕн продукцийĕ 1929 çулхипе танлаштарсан 1937 çулта 36 процент чакнă. Тир-сăран тăратасси вăл вăхăтра 84 процент чакнă. Атă-пушмаксен пахалăхĕ палăрмалăх начарланнă.

Апрел программине ытлашшипех тултарнă

ТАМБАВ, апрелĕн 29 ш. (ТАСС). Тамбăври вакунсем йусакан савăт коллективĕ пĕрремĕш квартăлта отличнă ĕçленĕшĕн Çулйĕр Халăх Комиссариачĕн куçса çӳрекен йалавне илнĕ. Савăт çĕнĕ çитĕнӳсем тунă. Май уйавĕ умĕнхи ăмăртăва сарса йарса, рабочисем апрелĕн 27-мĕшĕнче апрел уйăхĕнчи программăна ытлашшипех тултарнă. Тавар турттаракан вакунсене план тăрăх 365 йусаса кăлармала пулнă пулсан, вĕсем, 371 вакун йусаса кăларнă, пассажир вакунĕсене 50 йусаса, заданийĕ 100 процент тултарнă. Задани тăрăх 1.894 вакун урапи тумала пулнă пулсан—2410 тунă.

„Хĕрлĕ плошчĕдре пулас тесе, епĕ пурне те пама хатĕр"

Испани ачисем патне йаракан çырусем

Мускаври „Большая Пироговская" урамри ачасен çуртĕнче пурăнакан Испани ачисем хăйсен тăванĕсемпе йулташĕсенчен кашни кунах çырусем илсе тăраççĕ. Çак çырусем пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисен тăван çĕршывне—ССР Сойузне хĕрӳллĕн йуратни çинчен, паттăр Испанин пĕчĕк гражданĕсене социалисăм çĕршывĕнче амĕш пĕчик ачине пăхнă пек тăрăшса пăхнашăн савăнни çинчен каласа параççĕ.

Хозе Катала коммунис хăйĕн Хозе йатлă ывăлĕ патне çапла çырать:

„— Есĕ çакна асра тыт: есĕ социалисăм çĕршывĕнче воспитани илетĕн. Есĕ Испанине таврăнсан, пурне те: манăн мĕн пуррине тата мĕн пĕлнине, епĕ пурне те пролетариат çĕнтерсе илнĕ çĕршывра туйантăм, тесе мухтанса калаттарасшăн епĕ сана".

Висенте Форрат ача патне унăн тусĕ çапла çырать:

— Епĕ санпа пĕрле Хĕрлĕ плошчĕдре пулса Хĕрлĕ Çар парадне курас тесе, пурне те савăнсах панă пулăттăм. Епĕр есĕ унта пулнăшăн савăнатпăр...

Бернардо Деље Рио хăй амăшĕнчен илнĕ çырура çапла каланă:

— Есĕ питĕ аван пурăнни çинчен çырнă çыруран уйăрăлма пĕлместĕп епĕ...

Çак шухăша темиçе хут та каласа çыраççĕ.

— Епĕ сирĕн çырусене илсен Совет Сойузĕ пирки тĕлĕнмесĕр тăма пултараймастăн,—тесе çырать Амелипе Хозефе патне вĕсен ашшĕ.—Совет Сойузĕ пирĕн ачасене ачашшăн тата йуратса йышăннă пĕртен пĕр çĕршыв. Çак тĕлĕнмеле çĕршыва курмасăр епĕ вилесшĕн мар.

Мадрид, Валенçи тата Барселонă гражданĕсем, Республикăлă Испанин бойецĕсем, вăл çырусенче Совет Сойузне пысăккăн тав тунă сăмахсемпе çыраççĕ.

(ТАСС).

Çĕнĕ ӳсĕмсемпе кĕтсе илчĕç

Тăватă уйăхри плана тултарнă

ÇĔМĔРЛЕ. „Бољшевик" савăт коллективĕ апрелĕн 27-мĕшĕнче 1938 çулăн малтанхи тăватă уйăх планне 100,1 процент тултарчĕ. Савăтра Константин Порхиçенко йулташ çмени мала тухрĕ. Унăн çмени плана апрелĕн 24-мĕшĕнчех тултарнă.

Рабочисемпе инженерлă-техниклă работниксем РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйлас куна тата пысăкрах ӳсĕмпе кĕтсе илессишĕн кĕрешĕве вăйлатсах пыраççĕ. **Н. Иваницкий.**

Алăстаçсен ӳсĕмĕсем

Шупашкарти „Хĕрлĕ Мăлатук" ертел май уйавне плана ытлашшипех тултарнипе кĕтсе илчĕ. Уйăхри плана апрелĕн 28-мĕш тĕлне тимĕрçĕ цехĕ—112,6 процент, атă-пушмак тăвакан цех—116,4 процент, чăматансем тăвакан цех—118 процент тултарнă.

Ертелре стахановĕцсен хисепĕ ӳссех пырать. Тимĕрçĕ цехĕнчи Бронникăв йулташ апрел уйăх планне 200 процент, атă-пушмак цехĕнчи Ластăчкин—250 процент, Соснин йулташ—250 процент тултарнă. Çакăн пек ĕçлекенсем вуншарăн шутланаççĕ.

Алăстаççем РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйламали кун тĕлне çурçул планне тултарма обйазатĕлствă илчĕç. **В. В.**

Панă сăмаха пурнăçа кĕртрĕç

Деткомиççин Шупашкарти хапрăкĕнчи рабочисемпе инженерлă-техниклă работниксем май уйавĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса апрелти плана 170 процентран кайа мар тултарма обйазатĕлствă илнĕччĕ. Вĕсем хăйсен сăмахне пурнăçа кĕртрĕç. Хапрăк апрелĕн 29-мĕшĕ тĕлне плана 171,3 процент тултарнă. Каскалакан цех уйрăмăнах лайăх ĕçленине палăртмала. Вăл плана 177,9 процент тултарнă.

Бригадă рекорчĕ

Шупашкар хулинчи електростанцинчи Александр Филиппăв комсомолĕц йертсе пыракан бригадă уйав умĕнхи ăмăртура куллен кун ӳсĕмсем туса пычĕ. Унăн бригади апрелĕн 28-мĕшĕнче 2373,72 киловат-сехет електроенерги кăларса ку станцире халиччен пулман ӳсĕм—рекорд турĕ. Бригадă членĕсем çав ӳсĕме йаланлăхах çирĕплетме пулаççĕ. Вĕсем Щелчков йулташ бригадипе ăмăртса ĕçлеççĕ.

Хĕрарăм-бригадирсем

Шупашкарти спирт савăтĕнче виçĕ бригадăна хĕрарăмсем йертсе пыраççĕ. Ку бригадăсем йаланах малти ретре. Вĕсем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Ăмăртура Пегайева йулташ бригади пысăк тĕслĕхсем парать. Апрелĕн 27-мĕшĕнче унăн бригади нормăна 147 процент, 28-мĕшĕнче—153 процент ытла тултарнă.

Ваçилйĕвапа Богданава йулташсем йертсе пыракан бригадăсем те аван ĕçлеççĕ, нормăна йаланах ирттерсе тултараççĕ.

Хамăн телейе тупрăм

Хамăр аннен пĕртен-пĕр хĕрĕ пулнă епĕ. Шутласан ĕнтĕ, мана аттепе анне лайăх пăхса ӳстермеле пулнă. Çук, ун пек пулман. Вĕсем питĕ чухăн пурăннă. Чухăн çынсем ун чухне хăйсен ачисене лайăх пăхса ӳстерессi çинчен шутлама та пултарайман. Атте вилсен анне урăх çынна качча тухрĕ. Епĕ ун чухне 2 çулта пулнă. 6 çула çитиччен нумай хĕн-хур, асап куртăм. Мана тăван мар атте кĕркуннехи çăмăрлă сивĕ каççенче урама кăлара-кăлара йаратчĕ. Кайран мана, 6 çулхискере њанњкăна йачĕç. 15 çула çитиччен епĕ пуйан çынсен ачисене пăхса, кĕписене çуса тата ытти ĕççене ĕçлесе пурăнтăм. Пуйан çынсен ачисем шкулсенче вĕренетчĕç. Пирĕн вĕренме услови пулман.

Телейлĕ пурнăç çинчен аса та илеймен епĕр ун чухне. Совет влаçĕ пулнă хыççăн, хамăн телейе тупрăм. Халĕ епĕ 8 ача амăшĕ. Правитĕлствăран нумай ачалă пирки пулăшу илсе тăратăп. Коммуниссен партийĕ тата пирĕн йуратнă çулпуç Сталин йулташ пирĕн ачасене телейлĕ те савăнăçлă пурнăç туса пачĕ. Ĕлĕк пире çуратнă хыççын, анне куљљаннă, мĕнле пăхса ӳстерессi хытă шухăшлаттарнă ăна. Халĕ епĕ кун çинчен шухăшламастăп та. Манăн ачасене ваљљи йаланлăхах телейлĕ пуласлăх, йаланлăхах телейлĕ те савăнăçлă пурнăç пур. Ачасене хам пĕччен мар, пирĕн тăван коммунисла партi тата правитĕлствă пăхса ӳстерет, вĕсене хутла вĕрентет. Çавăншăн ĕнтĕ епĕ хамăрăн тăван Сталина тав тăватăп.

Манăн хĕрĕм 5-мĕш класра, ывăлăм Колља—3-мĕш класра, Миша—1-мĕш класра вĕренеççĕ. Вĕсем Ленин — Сталин парти ĕçĕшĕн чĕререн тăрăшса ĕçлекенсем пулма, Сталина пулăшакансем пулма вĕренеççĕ. Епĕ лайăх пĕлетĕп, манăн ачасем ӳссе çитсен, хăйсене лайăх пăхса ӳстерекен Иосиф Виссарионович Сталин йулташа чĕререн тав тăваççĕ.

М. П. Михейĕвă.

Улатăр хули.

Пайан Шупашкарта

Майăн пĕрремĕшпе иккĕмĕшĕнче Шупашкар хулинчи рабочисем, служăщисем, вĕренекенсем Май уйавне пысăк савăнăçпа ирттереççĕ. Нумай предприйатисенче, учрежденисенче, шкулсенче, клубсемпе театрсенче вечĕрсем тата постановкăсем пулса иртеççĕ.

ТИР-САРАН САВАЧĔ

Пайан каçхине савăт клубĕнче рабочисен вечĕрĕ пулать. Рабочисенчен организациленĕ драмкружок „Шестеро любимых" йатлă пйесăна лартса парать. Май уйавĕ йачĕпе пулакан чаплă ларура малта пыракан стахановĕцсене премисем параççĕ. Завкомпа дирекци премисем пама 3000 тенкĕ укçа уйăрса хунă. 7 рабочине иккĕ ернелĕх канмали çуртa йараççĕ.

ДЕТКОМИÇÇИ ХАПРАКĔ

Рабочисем ваљљи художĕствăлă вечĕр пулать. Вечĕрта рабочисенчен организациленĕ хор кружокĕ çĕнĕ йурăсем йурласа парать тата спектакăљ лартать. А. Е. Верхилейĕвпа (çăматсем йăвалакан цехри механик) Н. Шчербаков (катка-пичке тăвакан цехри стахановĕц) йулташсем ĕнер Хусана 5 кунлăх екскурçине тухса кайрĕç.

КИНОТЕАТР

Пайанпа ыран театрта „Великий гражданин" картинăна кăтартаççĕ, вĕренекен ачасем ваљљи çак кунсенче иккĕшер сеанс пулать. Пайан каçхине Хĕрлĕ плошчĕдре „Приговор суда—приговор народа" киножурнал кăтартаççĕ.

СТРОИТĔЛСЕН КЛУБĔ

Демонстраци хыççăн строитĕлсен ачисене тата каçхине рабочисемпе вĕсен çемйи членĕсене кино кăтартаççĕ, кайран концерт пулать. Майăн иккĕмĕшĕнче Хула Совечĕн сачĕнче массăлă вăйăсем, ташăсем, аттракционсем т. ыт. пулаççĕ. Каçхине клуб çумĕнчи драмкружок вăйĕпе спектакăљ лартаççĕ. Майăн 5-мĕшĕнче пичет кунĕ йачĕпе рабочисен пухăвĕ пулать.

„ТЕМП" СТАДИОНĔ

Пайанултă сехетре стадионра футбол вăййи пулать. „ТЕМП" спорт обшчĕствин командипе (Шупашкар) Горькирен килнĕ „Строител" командийĕ йулташла тĕлпулу туса футболла выљаса параççĕ. Майăн иккĕмĕшĕнче вĕренекен ачасен физкуљтурă праçникĕ пулать. 6 сехетре—футбол вăййи.

ПИОНЕРСЕН ÇУРЧĔ

Пайан, демонстраци хыççăн, шкула кайма çул çитмен ачасен утренникĕ пулать, каçхине 6 сехетре уйав йачĕпе костер организацилеççĕ. Косторта Майăн пĕрремĕш çинчен каласу пулать, ун хыççăн 45 пионера „ЮВС", „ПВХО" значокĕсене параççĕ. Вĕсем пионерсен çурчĕ çумĕнче организациленĕ çар секцийĕсенче вĕренсе нормăсене пĕтĕмпех парса татнă.

Майăн иккĕмĕшĕнче 12 сехетре кино-утренник пулать, каçхине „Ружье Кима" пйесăна лартса параççĕ.

Тĕттĕмлĕхрен савăнăçлă пурнăçа

Çĕрнӳ районĕнчи Çуткасси йал хресченĕсем ĕлĕкрех пит начар пурнăçпа пурăннă. Нумайĕшĕ кивĕ хура пӳртсенче тĕтĕм çăтса хăйсен сывлăхĕсене начарлатнă. Уйрăмăнах Максим Казаков çемйи нушалă пурнăçра пурăннă. Вăл нушалă пурнăçран хăтăлас тесе нумай тăрăшнă. Анчах вăл нийепле те тулăх пурнăç кураймăн. Унăн пĕр хура пӳртсĕр пуçне нимĕн те пулман. Выљăх-чĕрлĕх çинчен шутлама та пултарайман.

Йалта колхоз организацилесен Казаков чи малтанах колхоза кĕрсе, пĕтĕм вăйа хурса ĕçлеме тытăнать. Вăл колхозра тӳрĕ, тăрăшса ĕçленипе çеç хăйĕн пурнăçне тĕпренех лайăхлатрĕ. Колхозниксем Казаков тӳрĕлĕхне тата вăл колхозшăн чĕререн çуннине кура, ăна колхоз председателне суйлаççĕ.

Çапла вара Казаков йулташ колхоза бољшевикла, колхозниксене пуйан та куљтурлă пурнăçпа пурнакан тăвассишĕн тăрăшса ĕçлесе пырать. Казаков йулташ колхоз председателĕнче ĕçлеме пуçланăранпа колхоз хуçалăхĕ чылайах тĕреклĕнчĕ. Хăйне ваљљи те çĕнĕрен, таса та çутă пӳрт лартрĕ, выљăх-чĕрлĕх те пурте пур. Халĕ вăл майăн 1-мĕш уйавне савăнăçлă та тулăх пурнăçпа кĕтсе илет.

Çавнашкалах колхоза кĕнĕ чухне 12 хуçалăхăн ĕне пулман, халĕ вĕсем пурте ĕнелĕ.

Колхозниксем колхозра тăрăшса ĕçленипе пуйан та куљтурлă пурнăçпа пурăна пуçлареç. Халĕ 12 колхозник çĕвĕ çĕлемели машинă туйаннă. Кашни килте сехетсем, чечексем, занавескăсем пур. Вĕсем Майăн 1-мĕшне савăнăçлă пурнăçпа кĕтсе илеççĕ.

В. Замайский.
А. Макарăв.

Çĕнĕ пӳртсем

Анаткасри (Шупашкар р.) „Мартăн 8-мĕшĕ" колхоз членĕсен пурнăçĕ çулран-çул пуйан та куљтурăлă пулса пырать. Иртнĕ çулта колхозниксем çине тăрса ĕçленипе вăйлă тырпул туса илчĕç. Кашни ĕçкунĕ тăрăх çуршер пăт патне тĕштырă валеççе пачĕç.

Халь П. Дмитрийĕв, А. Ашайĕв, Н. Александрăв колхозниксем çĕнĕрен илемлĕ те пысăк пӳртсем лартрĕç.

В. Ривайăв.

19 колхозницă отпускра

ШĂХАСАН. Йамашри „Ударник" колхоз ача çуратмали çурт лартни иккĕ çул тултарчĕ. Халĕ колхоз хĕрарăмĕсем ĕлĕкхи пек карчăксем патне çӳремеççĕ, тӳрех ача çуратмали çурта кайаççĕ.

Колхозра çуралакансен хисепĕ çулран-çул ӳссе пырать. Ĕлĕкхи вăхăтра çуралакан çамрăк ачасенчен нумайĕшĕ вилсе пынă, халĕ вилекенсем питĕ сахал. Иртнĕ çулта Йамашри 55 колхозницă ача çуратмали çуртра çуратнă. Вĕсен ачисем пурте сывă пурăнаççĕ.

Халĕ йăварланнă колхозницăсем 19 çын отпуск илчĕç.

А. Иванов.

Çамрăк учитĕлсем

Ăшă çăмăр иртнĕ хыççăн урам хушшинчи çерем сасартăках йешĕлленчĕ. Тата кăмăлланрах кула пуçларĕ хĕвел. Тӳлек çил çурхи тулăх çĕре хуллен кăна лăпка-лăпка илет. Сат-пахчинчи улмуççисен папкисем тăртанчĕç, паркаланчĕç. Сывлăш уçă, çăмăл. Çырма хĕрринче, сывлăша шăнкăрав пек йанратса, ирех ача-пăча сассисем илтĕнеççĕ. Аван, питĕ аван.

Акă, паха симĕс кавир сарнă пек, тикĕс урамна учитĕл пырать. Унпа пĕрле пĕр ушкăн ача-пăча. Учитĕл пысăк мар, çак шавлă ушкăнра ăна уйăрса илме те хĕн, хăй те ача темеле. Ачасен кулса тăракан хаваслă сăн-пичĕсем вĕрентекенпе вĕренекенсем хушшинчи йурату çинчен, çуркунне çинчен, тăван çĕршыври телейлĕ пурнăç çинчен калаççĕ.

Çапла ачасем савăнăçлăн шкулала кĕреççĕ. Шкул кантăкĕсене уçнă, чӳрече çинче ларакан чечексем, уçă кантăк витĕр тулала, хĕвел патнеле туртăнаççĕ. Звонок. Ачасем пĕрин хыççăн тепри партăсем хушшине кĕрсе лараççĕ.

Иккассинчи (Шупашкар р.) туллимар вăтам шкулта вĕрентекен Ваçилйĕв йулташ учитĕл пулса иккĕмĕш çул ĕçлет. Вăл хăйĕн çулĕсемпе питех те çамрăк-ха. Шкула малтанхи хут пырса кĕрекен çын ăна вĕренекенсемпе хутăштарса йама та пултарать. Анчах унăн шкулти ĕçĕ пысăк мухтава тивĕçлĕ.

Вăл кăçал иккĕмĕш класра вĕрентет. Унăн класĕ дисциплинăпа пĕлӳ тĕлĕшĕнчен паха тĕслĕхсем кăтартать.

Ваçилйĕв йулташ шкулти вĕренекенсемшĕн те вĕрентекенсемшĕн те чи малтан хăй примерлă пулса тăрать. Унăн пĕтĕм вĕрентӳ ĕçĕ планпа пулса пырать, кашни урока тĕплĕн лайăх хатĕрленсе пырать, урокра мĕнле минутра мĕн тумалине малтан лайăх палăртса хурать. Ваçилйĕв ирттерекен уроксенче савăнса, канса ларатăн, урок пĕтессе пĕр ача та кĕтмест. Иккĕмĕш класра вĕренекенсем пурте лайăх вулаççĕ, вулани çинчен тĕплĕн каласа параççĕ. Учитĕл хăй ачасене пичетленĕ пек шăратса çырса кăтартать, ачасем те, учитĕле курса, çавăн пекех çырма тăрăшаççĕ. Вĕренекенсем хăйсене типтерлĕ тыткалаççĕ, тасалăха пĕлеççĕ, мĕншĕн тесен, вĕсен учитĕлĕ типтерлĕ, çи-пуçĕ ун лайăх, таçа.

Ваçилйĕв ачасемпе класра çеç мар, клас тулашĕнче те ĕçлет. Вăл кашни ачă хăйне урамра, килте мĕнле тыткаланине йаланах пĕлсе тăрать, çитмĕнлĕхсене вăхăтра тӳрлетет, пĕр пĕр кăлтăк пулсан, ачасен ашĕ-амăшĕсемпе тĕл пулса калаçать. Ваçилйĕв учитĕл шкулти вĕрентӳ ĕçне йĕри-таврари чĕрĕ пурнăçпа, социалисăмла çĕршывăн пурнăçĕпе çыхăнтарса пырать, çавăнпа унăн урокĕ ачасемшĕн интереслă, кăмăллă.

Пирĕн республикăра çамрăк педагогсем халăх учитĕлĕсен çарĕнче пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Республикăри педагогикăлă училищăсенчен çулсерен 500-шер çын вĕренсе тухса, учителе кĕреççĕ. Кăçалхи вĕренӳ çулĕнче çĕнĕрен 700 педагог вĕренсе тухмала. Вĕсем килес вĕренӳ çулĕнче ачасене вĕрентме тытăнаççĕ.

Аслă Октăбĕр революципе пĕрле çуралса ӳснĕ çамрăксем патша чухнехи тискер саманана пĕлмеççĕ. Ĕлĕк чăваш ĕçхалăхĕн ачисене пупсемпе тийечуксем „Турă саккунĕсемпе" молитвăсем вĕрентсе пуçĕсене минретнĕ. Халĕ халăх хушшинчен тухнă учитĕлсем кунран кун вăйланса, ӳссе пырса чăваш ачисене телейлĕ те савăнăçлă пурнăç тума вĕрентеççĕ.

Çамрăк учитĕлсем шкулта ĕçлеме хĕпĕртесе кайаççĕ. Хĕпĕртемесĕр! Партипе совет влаçĕ вĕсене чи хаклă, чи ответлă ĕç шанса парать. Çамрăк учитĕл куçĕ умĕнче пулас инженерсем, пилотсем, тухтăрсем, аслă çĕршывăн геройĕсем, учитĕлсем лараççĕ. Çакна курса çамрăк учитĕл ачасене вĕрентес ĕçе пĕтĕм вăйне, пултарулăхне, талантне парать.

Иккассинчи шкултах пĕрремĕш класра Ваçилйĕвă йулташ вĕрентет. Вăл Çĕрпӳри педагогикăлă училищăран пĕлтĕр çеç вĕренсе тухнă, комсомолкă. Пĕрремĕш çул кăна ĕçлет пулин те вăл тĕлĕнмеле ăсталăх кăтартать. Ун класĕнчи ачасем лайăх çырма, лайăх вулама вĕреннĕ.

Çакăн пек паха тĕслĕхсем Куславкка районĕнчи Çĕнĕ Кинчер, Аслă Сала, Чашлама шкулĕсенче те курма пулать. Çĕнĕ Кинчер туллимар вăтам шкулĕнчи Филиппăв учитĕл 5—7 классенче истори вĕрентет. Вăл педучилищă вĕренсе пĕтернĕ, шкулта виççĕмĕш çул ĕçлет. Паллах, аслă классенче ответлă предмета тытса пыма çăмăл мар, кунпа пĕрлех Филиппăв йулташăн ĕç опычĕ те çитеймерĕ. Анчах вăл йăвăрлăхсенчен хăраса тăмасть. Вăл уроксене лайăх хатĕрленет, историпе пуйан та паха материалсем пухать. Ун урокĕсем аван иртеççĕ, ачасем историпе питĕ интересленеççĕ. Филиппăв хăйĕн пĕлӳлĕхне хăпартасшăн куллен ĕçлесе пырать, вăл хаљ пединститутра заочнă виççĕмĕш курсра вĕренет.

Шкул ĕçĕсĕр пуçне, çамрăк учитĕлсем йалти обшчĕствăлă политикăлă ĕçе те активлăн хутшăнса пыраççĕ. Вĕсенчен нумайĕшĕсем хаљхи вăхăтра пропагандиссем, агитатăрсем пулса ĕçлеççĕ, халăха Сталинла Конституципе суйлав саккунĕсене ăнлантарса параççĕ. Çамрăк учитĕлсенчен чылайĕшĕсем—комсомолĕцсем, вĕсем учитĕлсем хушшинче политвĕренӳ ĕçне йĕркелесе пыраççĕ.

Анчах çамрăк учитĕлсене вĕсен педагогикăлă ăсталăхне хăпартас йенĕпе шкул директăрĕсемпе вĕрентӳ пайĕн пуçлăхĕсем, нумай çул хушши ĕçленĕ учитĕлсем начар пулăшса пыраççĕ. Хăшпĕр çĕрте çамрăк учитĕл çине пĕтĕм йăвăр ĕççене тийеççĕ, пулăшни çук. Çамрăк учитĕле куллен пулăшса, методикă йенчен тĕплĕ кăтартусем парса пыни кирлĕ. Çамрăк учитĕлсен ĕçлес хастарлăхĕ пысăк. Вĕсем Сталинла Конституци панă вĕренӳ правине пурнăçа кĕртсе пырассишĕн, социалисăмла çĕршыв ваљљи паха пĕлӳлĕ, çивчĕ ăстăнлă, çирĕп сывлăхлă бољшевиксем пăхса çитĕнтерессишĕн чĕререн тăрăшса ĕçлеççĕ. Вĕсем халăх, коммуниссен партийĕ, аслă çулпуçĕ Сталин йулташ шанса панă ĕçе тума пултарнишĕн телейлĕ, хаваслă, чыслă, мухтавлă.

П. Д. Данилăв.

Ответлă редактăр Н. М. СЕМЕНАВ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 223

Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 301